К83
С46
Ч-37731

ЧĂВАШ ХАЛĂХ СĂВĂÇИ

УХСАЙ ЯККĂВЁ



Национальная библиотека ЧР
4-037731

ВОЗВРАТИТЕ КНИГУ НЕ ПОЗЖЕ
обозначенного здесь срока

К К83
С76

Чăваш патшалăх гуманитари ăслăлăхĕсен институчĕ

ЧĂВАШ ХАЛĂХ СĂВĂÇИ УХСАЙ ЯККĂВĔ

Пурнăçĕпе пултарулăхĕн ĕлкевĕсем

Шупашкар — 2001

К 83.3 9 (=Чув) 6 – Ухсай

Чăваш патшалăх гуманитари ăслăлăхĕсен институчĕн
Ăслăлăх Канашĕ йышăннипе пичетленет

УДК 821.512.111.0
ББК 83.3 (2Рос=Чув)
С 76

ПРОВЕРЕНО
2010

СТАНЬЯЛ В.П. Чăваш халăх сăвăçи Ухсай Яккăвĕ: Пурнăçĕпе пултарулăхĕн ĕлкевĕсем. — Шупашкар, ЧПГАИ, 2001. 64 с.

Кĕнекене чăваш литературин классикĕ Я.Г.Ухсай çуралнăранпа 90 çул çитнине халалласа кăларнă. Архивсенчи хутсемпе усă курса унта поэт пурнăçĕн халиччен çутатман саманчĕсене уçса панă, пултарулăх эткерне пĕтĕм анлăшĕпе кăтартма, малашнехи тĕпчев йĕрĕсене палăртса хăварма тăрăшнă.

СТАНЬЯЛ В.П. Народный поэт Чувашии Яков Ухсай: Штрихи к портрету. — Чебоксары, ЧГИГН, 2001. 64 с.

Брошюра, посвященная 90-летию со дня рождения классика чувашской литературы народного поэта Я.Г.Ухсая (1911—1986), на основе архивных материалов освещает оставшиеся до сих пор неизвестными некоторые страницы жизни и творчества писателя. Вторая часть исследования раскрывает поэтический мир, средства образности и выразительности его произведений.

Предназначена широкому кругу читателей, краеведов, учителей, студентов, учащихся.

Ч-37731

ISBN 5-87677-034-5

© Чувашский государственный институт гуманитарных наук, 2001

УХСАЙ ЯККĂВĔН ПУРНĂÇĔПЕ ПУЛТАРУЛĂХĔ

Яков Гаврилович Ухсай (26.XI.1911—7.VII.1986) — чăваш халăхĕн таса чунлă, вичкĕн ăслă ывăлĕ, Чăваш халăх поэчĕ (1950), Чăваш Республикин ӳнер тава тивĕçлĕ ĕçченĕ (1945), Чăваш Республикин К.В.Иванов ячĕллĕ патшалăх премийĕн (1971) тата Раççей Федерацийĕн М.Горький ячĕллĕ патшалăх премийĕн лауреачĕ (1972), Хисеплĕ çилçунатçă (1977), Чăваш Республикин Ĕç Мухтавĕпе Паттăрлăх Кĕнекин сăпачĕ (1984), Тăван Çĕршыв вăрçин 1-мĕшпе 2-мĕш пусăмлă орденĕсен, «Хисеп палли», Ĕçлĕх Хĕрлĕ Ялав, Октябрь Революцийĕн тата Ленин орденĕсен кавалерĕ; талантлă сăвăç, драматург, куçаруçă, публицист, вĕрентӳçĕ, тĕпчевçĕ, хăй пурăннă чухне тухнă 52 кĕнеке авторĕ, Тăван Çĕршыв аслă вăрçин (1941—1945) салтакĕ, Чăваш Республикинче йĕркеленнĕ 141-мĕш дивизипе тата Кантемировка танк çарĕпе пĕрле Европăн çур пайне утса тухнă хаçатçă.

Вăл Пушкăртстанри Слакпуç ялĕнче çуралса ӳснĕ, ăна унтах Кĕслету çине пытарнă. Сăвăç Пишпӳлекре, Ĕпхӳре, Мускавра вĕреннĕ, ĕçленĕ, Патăрьелĕнче, Тĕрлемесре, Чĕмпĕрте ачасене вĕрентнĕ. Шупашкарта, Куславкка районĕнчи Карач ялĕнче пурăннă.

Я.Г.Ухсай ятне тĕнчери тĕрлĕ энциклопедисене кĕртнĕ. Ун ячĕпе Культура керменĕсем, музейсем, кĕтессем, ансамбльсем, палăксем пур. Пултарулăхĕпе пурнăçне вăтам тата аслă шкулсенче вĕрентеççĕ. Сăввисемпе сахал мар юрă хывнă, трагедийĕсене театрсем лартаççĕ.

Халăх поэчĕн пурнăçĕпе пултарулăхне тĕпчесе çырнă ĕçсем сахал мар. Вĕсенчен паллăраххисем çаксем:

Сироткин М.Я. Я.Г.Ухсай //Чăваш совет литератури. — Ш., 1972.

Басаргин Б.А. Яков Ухсай. — Чебоксары, 1965.

Власенко А.Н. Яков Ухсай. — М., 1976.

Иванов И.И. Яркий и самобытный талант. — Чебоксары, 1979.

Народность и художественность произведений Я.Г.Ухсая. — Чебоксары, 1984.

ПУРНĂÇĔН ПАЛЛАРАХ ТАПХĂРĔСЕМ

1911 çç., чӳкĕн 26-мĕшĕ — Пушкăрт Республикинче, Пелепей районĕнчи Слакпуç ялĕнче, Пăртта раттинчи Кевриш чухăн хресчен килйышĕнче иккĕмĕш ача — Якку çуралнă.

1920—1924 çç. — Слакпуçĕнчи пуçламăш шкулта вĕреннĕ.

1924—1928 сс. — Пишпӳлекри хресчен çамрăкĕсен шкулĕнче пĕлӳ пухнă. Шкул хаçачĕпе литература журналĕн тĕременĕ пулнă.

«14 çулта эпĕ тăван килтен тухса кайнă. Пишпӳлекри хресчен çамрăкĕсен шкулĕ эпĕ вĕреннĕ вăхăтра интернат пулнă. Кунта ачасем Пушкăртăн тĕрлĕ кĕтесĕсенчен килетчĕç. Пӳлĕмре 30 ытла ача пурăнаттăмăр. Хăш чухне, паллах, çапăçкалани те пулнă, анчах яланах пĕр-пĕрне мăйăрпа, кукăль татăкĕпе хăналанă» (Автобиографирен //Советские писатели. Автобиографии, т. 4. М., 1972, 621 с.).

1928 ç. — Ĕпхӳри халăх çутĕç институчĕн хатĕрленӳ уйрăмĕнче вĕреннĕ. Шупашкарти, Хусанти, Самарти тата ытти çĕрти хаçат-журнал тĕременлĕхĕсемпе (редакцийĕсемпе) çыхăну йĕркеленĕ. Мускаври «Чăваш хресченĕ» хаçатăн хыпарçи пулса тăнă, сăвăсем çырма пуçланă.

1929 ç. утă — Чăваш ен пичетĕнче — «Сунтал» журналта пĕрремĕш хут сăвă («Юратрăм эп тăван хире...») пичетленнĕ.

«Вăл маншăн аслă уяв пулчĕ. Романсемпе сăвăлла трагедисем пичетленсен те эпĕ кун пек савăнман» (Автобиографирен //Советские писатели. Автобиографии, т. 4. М., 1972, 623 с.).

1930 ç. Аслă шкула кĕме хатĕрлекен курсран вĕренсе тухнă.

1930 ç. çурла Мускаври М.В.Ломоносов ячĕллĕ университетăн литература факультетне вĕренме кĕнĕ.

1931 ç. авăн МПУ литфакĕнчен хăйне тĕллĕн уйрăм шкул — тĕременлĕхпе пичетлев (редакционно-издательский) институчĕ туса хунă.

1933 ç. Института хупнă.

1933—1934 çç. Я.Г.Ухсай Мускаври «Коммунар» хаçат корреспонденчĕ, унтан — Пушкăрт Республикинчи Приютовăпа Пишпӳлек МТСĕсем (машина-трактор станцийĕсем) кăларса тăнă нумай тиражлă хаçатсен тĕременлĕхĕн ĕçлевçи.

«Вĕреннĕ вăхăтрах эпĕ Мускаври «Коммунар» хаçат корреспонденчĕ пулнă. Тăтăшах чăваш рабочисем ĕçлекен вырăнсене тухса çӳренĕ, очерксем, фельетонсем çырнă. Эпĕ тĕл пулнă çынсем каярах сăвăсемпе поэмăсенче сăнланнă» (Автобиографирен //Советские писатели. Автобиографии, т. 4. М., 1972, 626 с.).

1934 ç. Ĕпхӳре «Сăвăсем» ятлă пĕрремĕш кĕнеке тухнă.

1934 ç. вĕçĕнче	Шупашкара куçса килнĕ. Кĕске вăхăт Чăваш писателĕсен союзĕн правлени секретарĕнче ĕçленĕ.
1935 ç. çулла	Ĕпхĕве таврăннă, Пушкăртри ăслăлăхпа тĕпчев институтĕнче ĕçленĕ. Халăх сăмахлăхне пухнă, «К.В.Иванов» кĕнеке çырнă.
1936 ç. раштав	Шупашкара куçса килнĕ.
1937 ç.	Чăваш радиокомитечĕн тĕременĕ (редакторĕ).
1937 ç. авăн	Патăрьелĕнчи педагогика училищинче тăван чĕлхепе литература вĕрентме тытăннă.
1937 ç.	Патăрьелĕнче поэта «халăх тăшманĕ» тесе айăплама пуçланă. «Çав-çавах эпĕ «Туй» поэмăна çыртăм. Хусанкайпа чăваш халăхĕн ячĕпе Сталина çыру ятăмăр. Сăвăласа çырнă çыру 1937 çулта пичетленчĕ, çав çулах мана «халăх тăшманĕ» тесе айăпларĕç, пичетре ĕçлеме чарчĕç» (Я.Г.Ухсай В.П.Туркин патне 1980 çулта янă çыруран).
1937 ç. юнан 15-мĕшĕ	Патăрьелĕнчен васкавлă тухса кайнă. Çĕрпӳ патĕнче автоаварие лексе йывăр аманнă, сыватăшра (больницăра) вырттнă. «1937 çулхи юпан 16-мĕшĕнче ирхине шăн çĕр çинче сулахай ура тата кăкăр ыратнипе вăранса кайрăм» (Я.Г.Ухсай В.П.Туркин патне 1980 çулта янă çыруран).

1937 ç. **раштав**	Улатăр хулинче Я.Г.Ухсай кĕнекисене илемлетекен И.Т.Григорьев художник хваттерĕнче виçĕ уйăх сывалса пурăннă.
1938 ç.	СССР Писателĕсен союзĕн членне илнĕ. «Чăваш коммуни» (халĕ «Хыпар») хаçатăн вырăнти хыпарçинче ĕçленĕ.
1938 ç. **авăн**	Чĕмпĕрти педагогика училищинче тăван чĕлхепе литература вĕрентме пуçланă.
1939 ç. **пуш—ака**	Мухина Мария Дмитриевнăпа пĕрлешнĕ. Малтан Ĕпхĕве, унтан Мускава кайса пурăнать. Кĕçех Карач ялне таврăнать. Шупашкарта чарăннă.
1939 ç. **çурлан 13-мĕшĕ**	ЧАССР Халăх çутĕç комиссариачĕ Я.Г.Ухсая Етĕрнери педучилищĕне ĕçлеме яма хушу кăларнă.
1939—1940 çç.	Тĕрлемесри вăтам шкулта ĕçленĕ, «Тутимĕр» трагедие çырса пĕтернĕ.
1940 ç.	Яланлăхах Шупашкара куçса килнĕ. Кĕнеке кăларăшĕнче (издательствăра) ĕçленĕ.
1940 ç.	Ухсайăн аслă ывăлĕ Якку чирлесе вилнĕ.
1941 ç.	Шупашкарта «Тутимĕр» трагеди уйрăм кĕнекен тухнă.
1941 ç. **çĕртме**	Тăван Çĕршывăн аслă вăрçи пуçлансанах халăх ополченийĕн отрядне çырăннă, вĕрену батальонĕн курсанчĕ пулса тăнă.

1941 ç.
кĕркуннеренпе

141-мĕш дивизии «Родина зовет» хаçачĕн тата фронтри ытти хаçатсен тĕременлĕхĕсен çар корреспонденчĕ.

1942 ç.
раштав

141-мĕш дивизири командирсемпе салтаксен ячĕпе чăваш халăхне Воронеж фронтĕнчен çыру янă.

1944 ç.

Поэтăн «Вăрçă хирĕнче» ятлă сăвăсен пуххи пичетленсе тухнă. С.В.Элкер йĕркелесе кăларнă.

1945 ç.

Чăваш АССР ӳнер тава тивĕçлĕ ĕçченĕ ятне панă.

1946 ç.
çу

Çар хĕсметĕнчен Шупашкара таврăнать. Чăваш АССР кĕнеке кăларăшĕнче илемлĕ литература кĕнекисем тата «Тăван Атăл» альманах редакцилеме пуçлать.

1948 ç.

Пултарулăх ĕçĕпе кăна пурăнма тытăнать. Аслă хĕрĕ Ольга çуралать.

«Вăйсăр та имшертерех пулнă пулас эпĕ: хытă макăраттăмччĕ тет. Вара нихăшĕ те ним туса лăплантарайми пулсан атте мана хăй аллине илетчĕ те, пахчана тухса, сехечĕ-сехечĕпе çĕклесе çӳретчĕ, юрă ĕнĕретчĕ тет. Çав мелпе кăна çывăрса кайма пултарнă эпĕ». О.Я.Ухсай — поэт архивĕн управçи (Шупашкарта пурăнать).

1950 ç.

Чăваш литературипе ӳнерĕсен Мускаври кунĕсене хутшăннă.

Чăваш АССР халăх поэчĕ ятне панă.

1951 ç.

«Кĕлпук мучи» поэма уйрăм кĕнекен кун çути курнă.

1951 ç. Иккĕмĕш хĕрĕ Елена çуралнă. Е.Я.Ухсай — историк. Мускавра пурăнать.

1955 ç. «Акăшкӳл» поэма уйрăм кĕнекен пичетленнĕ.

1959 ç. «Лирика» сăвă пуххи тухнă. Чăваш АССР Верховнăй Совечĕн депутатне суйланнă.

1961 ç. «Çĕр» поэма уйрăм кĕнекен тухнă. 50 çул тултарнă май Ĕçлĕх Хĕрлĕ Ялав орденне тивĕçнĕ.

1965 ç. «Ту урлă çул» роман пичетленнĕ.

1969 ç. аванăн 25-мĕшĕ Поэт мăшăрĕ, паллă çыравçă Мария Дмитриевна Ухсай Карачра сарăмсăр вилсе кайнă.

«Масар çинчен аннене пытарса таврăннă чухне те унран пĕр сăмах та илтмерĕм эпĕ. Начарланса кайнă питĕнчи икĕ куçĕ кăна вут-хĕм сапса тăратчĕ. Çав куçсенче, ман шутпа, куççуль валли вырăн та çукчĕ» (Ольга Яковлевна аса илĕвĕнчен).

1969 ç. «Шуйттан чури» трагеди тухнă.

1971 ç. Çуралнăранпа 60 çул çитнĕ май Октябрь Революцийĕн орденне панă. «Ача чухнехи çăлтăрăм» тата «Силпи çăлкуçĕ» поэмăсен ярăмĕшĕн Чăваш АССРĕн К.В.Иванов ячĕллĕ патшалăх премине тивĕçнĕ.

1972 ç. «Ача чухнехи çăлтăрăм» трилогишĕн РСФСРăн М.Горький ячĕллĕ патшалăх премине панă.

1977 ç. **нушăн 19-мĕшĕ**	Я.Г.Ухсая чăваш студенчĕсен литература пĕрлешĕвĕ йĕркеленĕ «Хисеплĕ çилçунатçă» ятне панă.
1981 ç.	Поэта 70 çул тултарнă май Ленин орденĕпе чыслана.
1984 ç.	Ухсай Яккăвĕн ятне Чăваш Республикин Ĕç Мухтавĕпе Паттăрлăх Кĕнекине кĕртнĕ.
1986 ç. **утăн 7-мĕшĕ**	Йывăр чирлесе выртнă хыççăн Шупашкарта вилнĕ. Пушкăртстанри Слакпуçĕнче Кĕслету çине пытарнă.

О.Н.Терентьева хатĕрленĕ.

ПУРНĂÇĔНЧИ ТĔРЛĔ САМАНТСЕМ

Пăртта тăхăмĕ. Пăрттасен сăвă-юрăллă икĕ ывăлĕ Пушкăртстанри Слакпуç ялне çĕршыв пĕлмелĕх чыса кăларчĕç.

XX ĕмĕрĕн 70-мĕш çулĕсенче те Слакпуç хуралтисем çинче çерем пурччĕ, унта çын пĕвĕнчен кĕске мар мăян тапса ӳсетчĕ. Пăртта Кевришĕн нушаллă йышĕ асапланса пурăннă лаша витипе хурал пӳрчĕ ял варринчех ларатчĕç-ха. Ун тавра ута-ута çаврăннăччĕ, чаплă çынсен шăпи те хĕсĕк пулнишĕн хурланнăччĕ. Слак леш енчен, Киремет тăвайккинчен пăхса, пайтах шухăшланă: çакăн пек çырма-çатраллă чăваш ялĕсенченех çĕршыва юрăхлă паттăрсем çуралса тухаççĕ-çке!.. Паллах, Константин Ивановпа Яков Ухсай сăвăçсен тăван ялĕ паян асфальтлă та керменлĕ, парклă та музейлă. Ку йăлтăркка ырлăх халăхăн иртнĕ вăхăтне пĕрех те манăçтарма кирлĕ мар.

Ӳркенми таврапĕлӳçĕ, чăваш халăх ăсчахĕ Гурий Герасимович Макаровпа иксĕмĕр Ухсай аппăшĕпе йăмăкĕ — Ульккапа Униççе — патĕнче пулса калаçрăмăр. Несĕл йĕрне ӳкерес тесе, авалхи хутсене тустартăмăр. Хăвăрт манăçать çав иртсе кайнă пурнăç. Мăн аслашшĕ ятне пĕлекен те сахалланса юлнă! Несĕл йĕрне сакăр сыпăк пĕлмелле тесе нумай-нумай çынна чăрмантартăмăр.

Ухсай ашшĕ — Пăртта Кевришĕ, Гавриил Никифорович Никифоров (1869—1940) ĕмĕрĕпех нушаллă пурăннă чухăн хресчен, иккĕ авланнă. Малтанхи арăмĕ Хветура Хушăлкаран пулнă, вăл ача çуратса парайман, уйрăлма тивнĕ.

Иккĕмĕш арăмне Кевриш ачаллă хĕрарăма, Хир Çирĕклĕ хĕрне, Ярмула Алексеев арăмĕ шутланнă Алтаччене (Евдокия, 1882—1944) Пракахви ятлă ывăлĕпе пĕрле илнĕ. Пракахви Алексеев (1906—1978) Кевришсем патне пынă чухне ултă уйăха çитнĕ. Ашшĕ тăван мар пулсан та, Кевриш килĕнче Пракахвие юратса пăхнă. Вăл хăй те ĕмĕр тăршшĕпех шăллĕсемпе йăмăкĕсене, ашшĕпе амăшне пулăшса тăнă; пурин патне те кайса çӳренĕ, çырусем çырнă.

Пĕрлешӳллĕ хуçалăхсем тунă вăхăтра Пракахви — Прокопий Ермолаевич Алексеев Слакпуçĕнче ял канашĕн

Чăваш халăх сăвăçи Я.Г.Ухсай. Шупашкар, 1965 çул.

председателĕнче ĕçленĕ. К.В.Ивановсен кил-йышне «кулаклатса» хупасран вăл хăтарса хăварна — маларах систерсе, аяккалла ăсатнă. Çакна эпĕ Роза Петровна Иванова (Константин Васильевич Иванов шăллĕн — Петĕрĕн хĕрĕ) çырса пани тăрăх пĕлетĕп. Пракахви мучипе курса калаçасси пулмарĕ, паллă милиционер ватлăх çулĕсене Казахстанра — Верук ятлă хĕрĕ патĕнче ирттерчĕ.

Чухăн Кевришпе Алтачче хутла пĕлмен. Пуç йăтмасăр ĕçленĕ, ырлăх курăнман. Инкек-синкек такăнтарсах пынă. Чухăн çын сăхманĕ çил вĕрнипех çĕтĕлет çав! Е лаши ӳксе вилет, пиллĕкмĕш ачине çăва çине йăтса кайма тивет. Вут-кăварĕ тата, вут-кăварĕ! Пуян Ваçинккасем те çунаççĕ, чухăн Кевриш те хур курать.

Пур-çук халне пухса, Кевриш Никифоров 15 çухрăмри Знаменка ялĕнчен çурт туянса килнĕ, тепĕр çулхинех çав çурт çунса кайнă: кӳршĕсен пӳртне аçа çапнă та, Кевриш çурт-йĕрĕ те кĕл пулнă. Мĕскĕне юлнă кил-йыша урам урлă пурăнакан тăванĕ — Чăлах Вихтăр хăй патне кĕртнĕ. Унтан та хăваласа янă: Виктор Николаевич Иванова (пуян Ваçинкка шăллĕне) кулак тесе айăпланă, çуртĕнче шкул уçнă.

Кевришсен вара хурал пӳртĕнче хĕсĕнкелеме тивнĕ. Каярахпа Утейка ялĕнчен тепĕр çурт илсе килнĕ. Анчах вăл çурт та телей кӳмен. Тĕп кил выраннĕ Я.Г.Ухсай ячĕпе çурт-музей лартичченех пушă тăчĕ. Улькка́па Униççе аппасем урăх çынсенчен илнĕ хăлтăр-халтăр пӳртре пурăнчĕç.

Я.Г.Ухсайсен тĕп килĕ (хальхи çурт-музей) К.В.Ивановсен килĕнчен инçе мар, кăшт тăвалла кăна. Ĕлĕкрен çапла ларнă чăваш ялĕ — пĕр йăх тымарĕнчен тухнисем пĕр çырмарах, пĕр тăвайккирех таврал́ла çаврăнса чăмăртаннă.

Пăртта Çимунĕн ывăлĕ, Ухсай Яккăвĕн аслашшĕ Микихвер (Никифор Семенович) тĕп киле юратнă ывăлне Кеврише парса хăварнă.

К.В.Иванов аслашшĕ Николай Семенович (писарь Микулай) — Микихверĕн шăллĕ. Кĕçтентинпе Яккун мăн аслашшĕ — пĕр çын. Кашкăр Иванĕн ывăлĕ-хĕрĕсем — Ванюшке, Çтаппан, Çимун, Пĕрччепе Хветут. Эпир халĕ Çимунăн виçĕ туратне пĕлетпĕр. Пĕр турачĕ — Микулай турачĕ — пуян Ваçинкка урлă «Нарспи» авторне ӳстернĕ. Чăлах Вихтăртан — Виктор Семеновичран — Калиста Викторовна урлă Ухсай хреснамăшĕ Анна аппа çут тĕнчене килнĕ. Ригăра пурăнатчĕ, 1981 çулта вилчĕ. Никифор Семеновичран — Кевриш урлă Ухсай çуралса ӳснĕ.

Çак виçĕ туратри аслă ăруран халĕ Кевриш хĕрĕ Лисук кăна юлчĕ. Тепĕр туратри К.В.Иванов йăмăкĕсем — Валентинăпа Евгения — Ухсайпа пĕр вăхăталлах çĕре кĕчĕç.

Турра шĕкĕр, Р.П.Иванова таврапĕлӳçĕ, Г.Г.Макаров, А.А.Кондратьев ăсчахсем тăрăшнипе К.В.Иванов несĕлĕн «йывăçĕ» туллин ӳкерĕнчĕ. Çавна май Я.Г.Ухсай тымарĕ те çырăнса юлчĕ. Çак ĕçе пуçарса янăран хама телейлĕ туятăп.

Эпĕ ыйтнипе Р.П.Иванова таврапĕлӳçĕ ман пата çакăн пек çыру янăччĕ: «Аслисенчен эпĕ ача чухнех пĕлеттĕм: Ухсай та Пăртта раттинченех, пирĕн тăванах. Анчах хăш сыпăкрине чухламан. Нумай пулмасть эпĕ К.В.Ивановăн ашшĕ енчен тачă тăванĕпе Калиста Викторовна Осиповăпа калаçрăм. Вăл çапла каларĕ: «Константин Иванов аслашшĕн Микулай Çимунĕн пиччĕш-шăллĕсем 11 (вунпĕрĕн) пулнă. Çавсенчен пĕри — Микихвер — Я.Г.Ухсай аслашшĕ». Калиста Викторовна çав пĕр тăвансенчен нумайăшне астăвать, вĕсене, тĕслĕхрен, Митрюк асатте, Кевриш асатте тесе чĕнет. Калиста Викторовна каланă тăрăх, К.В.Ивановпа Я.Г.Ухсай

икĕ сыпăкри тăвансем. Вĕсен мăн аслашшĕ (прадед) пĕрре — Семен Иванович».

1986 çулхи çу уйăхĕн 24-мĕшĕнчи çак çырăва çĕртме уйăхĕн 6-мĕшĕнче Яков Гавриловича Шупашкарти партстационар сыватăшĕнче вуласа патăм. Чирлĕ пулсан та, сăвăç шалти палатăран малтине тухсах утса çурерĕ: Калиста Викторовнăна, хреснамăшне (Аннана), вĕсен Киевра ĕçлекен маттур ывăлне — паллă кинорежиссера асăнчĕ («Шупашкарта киностуди пулнă пулсан, куçарса килеттĕм»). Ухсай каланисене çыру çинех çырса хутăм.

1991 çулта А.А.Кондратьев ăсчах «К.В.Ивановпа Я.Г.Ухсай несĕлĕсем» статья пичетлерĕ («Хыпар», раштав, 17). Вăл архив хучĕсене пăхнă, Кашкăр йăхне Таниле Йăванĕсемпе çыхăнтарнă, вара пĕр килтех икĕ Çимун — 11 çулти тата 2 çулти Семенсем пурри çинчен, вĕсенчен хăшĕ Яккун, хăшĕ Кĕçтукăн аслашшĕ пулни паллă мар тесе çырчĕ. Пупĕ темле усĕр пулсан та, пĕр килти чĕрĕ халлĕн ачасенех пĕр ят парасси пулмастех ĕнтĕ. Усрава илнĕ пулсан — тепĕр сăмах. Эпĕ Калиста Осипова каласа панисене шанатăп (вĕсем ЧПГАИ ăслăх архивĕнче те пур, 1974 çулта А.П.Лукьянов тĕрĕсех мар çырса илнĕ, 5, 1688, 9133). Кевриш çемйи хăйсем патĕнче пурăннă, апла пулсан хăйсен тăванлăхĕ хăш тымартан килнине пĕлнех ĕнтĕ!

Кевришпе Алтачче пилĕк ача пăхса çитĕнтернĕ. Кĕçĕнни — Униççе. Униççе аппа ача чухне чечче чирĕпе чирленĕ, куçпа аптрама пуçланă, суккăрланса юлнă. Эпир унпа темиçе те тĕл пулнă. Çилçунатçă-студентсемпе вăл питĕ савăнса калаçатчĕ. Савăнмасăр! Студентсем вут татса, кил-çурт таврашне тасатса паратчĕç, тем те пĕлесшĕн çунатчĕç. 1922 çулта çуралнă Униççе аппа 1991 çулта çитмĕле çитеймесĕрех çĕре кĕчĕ.

Ăна Ухсайăн аппăшĕ — Улькка (1909—1987) пăхса пурăнатчĕ. Улькка аппа качча кайман, колхозра ĕçленĕ, кил тытнă, йăмăкне пăхнă. Шкула çуреймен вăл, çырма-вулама хутпĕлменлĕхе хирĕç кĕрешекен курссенче вĕреннĕ. Ăслă калаçатчĕ, мĕнпур нушана çĕнтерсе пурăнма вăй çитерсе пычĕ. Нумай-нумай калаçнă эпĕ унпа. Слакпуç çинчен те, пурнăç çинчен те, Яков Гавриловичпа Мария Дмитриевна пирки те. Якку пурт юсама виççĕр тенкĕ парсан, ача пек хытă савăннăччĕ. Çыру çине вăхăтра хурав памасан шутсăрах

кулянатчĕ. Амăшĕн пăшăрханăвĕ ăна куçса юлнă пулĕ. Кĕçĕннисене никамăн та мар, унăн, аслă хĕрĕн, пăхмалла пулнă-çке!

Слакпуçĕнче пурăнакан аппăшĕпе йăмăксене мĕнле пулăшасси пирки калаçнă чухне Якку пиччен сăнĕ савăнăçлă пулнине пĕрре те курман. Çĕнĕ пурте Карачра мар, Слакпуçĕнче лартсан пурне те аван пуласса, унта музей уçма юрасса та калаçман мар. Аслă поэтăн пысăк чĕри касăлса ыратнине ун чухне эпĕ курса пĕтереймен. «Хытă чунлă-шим?» — теттĕм. Кунçыравĕсене (дневникĕсене) тата тахçанхи çырусене вуласан тин шăпи Ухсайăн та мĕн тери нушаллă, тамăклă иккенне ăнкарса пытăм.

Халĕ Ĕпхӳре 1914 çулта çуралнă йăмăкĕ — Лисук — Елизавета Гавриловна пурăнать. Вăл, пиччĕшĕ пекех, ялти пуçламăш шкулта, Пишпӳлекри колхоз çамрăкĕсен шкулĕнче вĕреннĕ, Ĕпхӳри индустри техникумĕнче тата Мускаври ялхуçалăх техникумĕнче (1934—1937) вĕреннĕ, унтан Тула облаçĕнчи МТСра агрономра ĕçленĕ. Кайран Туймазана, Чишмана, Ĕпхĕве куçнă, экономистра тăрăшнă. Лисук аппа студентсен «Çилçунат» пĕрлешĕвĕ чĕннипе Слакпуçне ятарласа пынăччĕ, нумай-нумай каласа панăччĕ.

Ухсай Яккăвĕн юратнă шăллĕ, сăвăсемпе поэмăсенче темиçе те асăннă Кирле (1918—1943) Слакпуçĕнчех çичĕ класс пĕтернĕ, почтăра, вулав çуртĕнче ĕçленĕ. 1938 çулта Хĕрлĕ Çара кайнă, Инçет Хĕвелтухăçĕнче тăнă. Хаяр вăрçă вăхăтĕнче Смоленск патĕнчи çапăçура çамрăк ĕмĕрне татнă.

Якку Пишпӳлеке 14 çулта тухса кайнă. Унта вĕреннĕ чухне малтанхи сăвви-юмахĕсене, ашшĕ-амăшĕ каласа панисене хăйсем алă вĕççĕн кăларакан хаçатпа альманахра, унтан район хаçатĕнче пичетленĕ. Ялкортан — Слакпуç хыпарçинчен — çуралса тухнă талантлă сăвăç.

«Эпир пулатпăр ик çĕмĕрт». 1936 çулхи раштавăн 30-мĕшĕнче, Çĕнĕ çул хавасĕ çитнĕ вăхăтра, Яков Ухсай поэзи çĕмĕртлĕхĕ çинчен сăвă çырса хунă. Ман шутпа, вăл ниçта та пичетленмен.

Сăвва Петĕр Хусанкая халаллани кăсăк. Эпĕ Петĕр Хусанкайпа тата Яков Ухсайпа пайтах калаçнă, вĕсем патĕнче килĕсенче хăнара та пулнă. Çав çулсенче икĕ аслă сăвăç пĕрле шăкăл-шăкăл калаçнине курма тӳр килмерĕ. Паллă поэтсем хăçан кама тиркесе илнисене тĕплĕн тĕпчемесĕр, хăш-хăш çыравçăсем вĕсене йытăпа кушак пек ӳкерсе кăтартатчĕç.



Чăваш халăх поэчĕсем Я.Г.Ухсайпа П.П.Хусанкай.
(*1950-мĕш çулсем*).

«Коммунизм ялавĕ» хаçатăн литературăпа ӳнер пайĕнче ĕçленĕ чухне мана çыравçăсемпе тем çинчен те калаçма, килти-тулти пирки ыйтса пăхма тивнĕ. Хусанкайран та, Ухсайран та пĕр-пĕрин çинчен сиввĕн калаçнине илтмен. Илтнĕ пулсан, тĕрĕссине калана пулăттам. Çук, илтменех. Ухсай саввисене вуласан, вăл Хусанкая уççăн мар тарахласа илни тĕл пулать. Анчах кăра Ухсай та, унран йăвашах мар Хусанкай та хăйсен çăлтăрлă тӳпине пĕлсе пурăннă, çĕр çинчи çӳп-çап валли пĕр-пĕрне варалакан сăмах ӳкермен.

Поэзи çĕмĕртлĕх пулсассăн
Эпир пулатпăр ик çĕмĕрт.
Ӳссе пыратпăр уçă саслан,
Юратнă тусăм, иксĕмĕр.

Юрă пекех çепĕç сăмахсем. «Аса илетĕп те сана — Ума тухатăн чăмăр питлĕн, Çумра хĕртет пек çулам сан...»

Тепĕр çур ĕмĕртен мĕн килессине турă пек курса тăрса, Ухсай сăввăн иккĕмĕш пайĕнчи виçĕ çавринче вилсен те пĕрле пуласси çинчен калать:

Вахăт çитсен, пĕрле ик вилĕм
Илесчĕ пирĕн иксĕмĕр.
Ӳтсем çĕрĕç, кун-çул пĕрчиллĕ
Юлатпăр иккĕн — ик çĕмĕрт.

Пире пытарччăр икĕ енлĕн —
Мăн юханшывăн ик енче,
Ик çĕмĕрт çеç шăтса çĕкленĕ
Ик вăрлăх пек чĕресенчен.

Çапла, ытарлă ӳкерчĕк. Анла танлаштару. Иванов вăрманĕ, Çеçпĕл пахчи. Поэзи çĕмĕртлĕхĕ. Мĕншĕн мăн шывăн икĕ енĕ? Тен, пĕри Иванов витĕмĕ, лăпкă та эпикăлла туртăм, Ухсай енĕ. Тепри — Çеçпĕлĕн пăлхавăрлăхĕ. Хусанкай чăваш поэзийĕнче Çеçпĕл йĕрне аталантарчĕ. Ку унăн енĕ. Пĕр аслă поэзин икĕ пысăк çыранĕ. Икĕ енче — çимĕçлĕ икĕ йывăç. «Вĕсем çырма урлах пĕрлешĕç Туратсемпе ытакланса. Çил-тăвăла çĕнме вĕсемшĕн, ӳсмешкĕн пулĕ те ансат».

Сăввăн вĕçлев çаври — чăваш поэзийĕн, поэзи сачĕн çĕмĕртлĕхĕ малашне чечекленсе те янăраса тăрасса шанни.

Чĕре çĕмĕрчĕсем çу кунĕ
Пĕркенĕç шур сурпансене,
Çарăмсанпа Силпи куккукĕ
Пĕрмай мухтавлĕ вĕсене.

Куçпăван ăсчах пек витĕр курса каланă. Калани тӳрре килтĕр тесе чарăнми тăрăшнă. Пĕлместĕп, çӳлтен пăрахса панă талант Пушкинпа Есенинăн пулнă пулĕ, Хусанкайпа Ухсайăн таланчĕсем питĕ-питĕ нумай ĕçленипе килнĕ. Кам алçырăвĕсене вуласа курнă, çавă вĕсен ĕçченлĕхĕнчен тĕлĕнсе ӳкĕ. Хальхи шултăрка çыравçăсен тăрăшулăхĕ аслисен чĕрни хури чухлĕ те курăнмасть.

Икĕ талант чăваш сăмахлăхне çĕклес тесе юнашар пыни, кашни хăй сассине, çулне, тĕнчекурăмне ыттисеннипе хутăштармасăр ĕçлесе пурăнни — тĕслĕх вырăнне лартса мухтанмалли пулăм.

Эпир Хусанкайпа пĕрле
Пăтранчăк хĕрлĕрех эрех

Ч-37731
НАЦИОНАЛЬНАЯ
РЕСПУБЛИКИ

Ĕçсе юрларăмăр çĕрле,
Вăрçа ăсантăмăр ирех, —

тесе сăвăланă 1944 çулта «Лев Толстой чинĕпе гвардире çӳрекен капитан» Ухсай Яккăвĕ.

Хула çывратчĕ, çавăнпа
Ман арăм çеç иксĕмĕре
Ăсатрĕ хĕрнĕ хурçăпа
Вут-хĕмлĕн кĕрлекен хире.

Вилме кайни пуйса килет
Тесе чăваш пилленипе,
Эпир киле таврăнăпăр
Чĕлхемĕр панă ĕмĕтпе...

Тус-тăванла юрату юрри ку. Аслине çулăхса ят илем-ха тесе çырни мар.

Вăл хăйне танлă курнă. Лайăх туйăм. Йăпăлтатма та, йăпăлтисене алайлама та Ухсай пĕлместчĕ.

Петĕр Хусанкайпа Ухсай Яккăвĕ поэзи çĕмĕртлĕхĕнче ăмăртса ĕçлени хайлавсенче сисĕнсех тăрать. Статьясенче те пур. Ячĕсене асăнмасăр тивертсе илнисем тупăнаççĕ. Çавсем ĕнтĕ вĕчĕхекен ăçтиçуксене «Хусанкайпа Ухсай пĕр-пĕрне юратмаççĕ» теме сăлтав панă.

Уксахласа, туя тытса «байронланса çӳренисене», сухал ярса та хырăнса хăтланнисене сăвва кĕртсе, Ухсай вĕçкĕнлĕхе, пушă каппайчăклăха тиркет. «Кăна Хусанкай пирки каланă пулмалла!» — теççĕ. Чăнах та, Петĕр Хусанкай та, Семен Элкер те, Ухсай хăй те уксахласа курнă. Ытгисене мар, тен, хăйне питленĕ сăвăç?

Аннен сĕтне çеç ĕмнĕ эпĕ,
Есенин сăввине çеç ĕмнипе
Хама каппайчăкла поэт хисепĕ
Туянмăп та варланмăп чĕремпе... —
(«Ака-суха туса ӳстертĕм тырă» сăвă, 1929)

Петĕр Хусанкай пахчине вăркăнтарнă чул татки теççĕ ку хайлав пирки. Апла мар. Пурне те, хăйне те калани. Хусанкай

кăна-им вăл çулсенче С.Есенинла çырнă? Поэт хăйĕн çирĕп шухăшне калать: «Хам пĕлнĕ пек янратăп кĕввĕме!» Çапла пулмалла та. Хыççăн утакан малти пулаймасть.

Икĕ аслă сăвăç шалти хавхаланупа ăмăртса, кăкăрсене танлаштарса финиша çитекен спортсменсем пек пыни çитĕнӳ парнеленĕ. 1935 çулта Ухсай «Тимĕр карта» («Ту урлă çул»), 1939 çулта Хусанкай «Аптраман тавраш» поэмисене пуçласа хуман пулсан, 1952 тата 1954 çулсенче икĕ сăвăллă роман — паха романсем! — тухса выртма пултарнă пулĕччĕç-и! Паллах, пулмастчĕ.

Петĕр Хусанкай Ухсайпа мĕнле калаçнине кăтартмасан юрамĕ. Акă унăн 1940 çулта нарăсăн 21-мĕшĕнче Ленинградран Тĕрлемесе янă çырăвĕ: «Якку! Сана шыра-шыра тĕнкем тухрĕ. Етĕрнерен пуçласа Малеевка таран пурсуй пек хăвалаттаратăп çырусене. Анчах эс Пушкăртра юртса çӳретĕн иккен... Мана Кĕçтентинĕн «I томне» кĕмен япалисем кирлĕ. Ăçта вĕсем? Пур-и? Ярса пар. Хăвăн чи лайăх сăввусене (Кĕçтентин трагедине, Ленин ачалăхĕ çинчен çырнине, «Туй», «Кĕлпук мучи» — пурне те) яр. Эпĕ «Чăваш поэзийĕн антологине» вырăсла тăвасшăн. Сана унта хисеплĕ кĕрекене — йĕкĕр алтăр тыттарса лартасшăн... Сывă пул, Алпастă. Ийе ППХ». Ирĕклĕ, уçă, танлă çыру. Çакăн пек туслăх пĕрле ĕçсе çӳресе муталаннисен «туслăхĕнчен» тем чуль лайăхрах. Яланах пулинччĕ çак виçе çыравçăсем, ӳнерçĕсем, пĕтĕм интеллигенци хутшăнăвĕнче. Пĕри — Алпастă, тепри — Ийе, çилленсе калани мар, юптарса шахвăртни. Ватăлсан та çаплах чĕнетчĕç пĕр-пĕрне!

Якку Ухсай вăрçă хирĕнчен М.Уйăп патне çырнинчен: «П.Хусанкай адресне пĕлетĕн пулсан, вăл çырма тытăннăранпа 20 çул çитнине хисеплесе манран, Алпастăран, ăна, Тиллие, саламла. Вăл ачи пысăк талантлă. Чăваш литературишĕн нумай вăй хучĕ, чĕрене шар çуракан йывăр инкексем курсан та, пăшăрханса ӳкмерĕ, çаплах тăван халăхшăн çунчĕ, халĕ те çунать пулĕ тесе ĕмĕтленетĕп» (ЧПГАИ ĂА, V, 312, 2251; 1944 çулхи акан 17-мĕшĕ).

XX ĕмĕр классикине К.В.Ивановпа Çеçпĕл Мишши хыççăн вĕсем чăнах та йĕкĕрешлĕн кĕрсе юлчĕç. Темле пулсан та, халь тин урăххисем вĕсемпе тан тăраймаççĕ. XXI ĕмĕртисен — хăйсен виçи.

Талпăнупа хастарлăх, ĕçченлĕхпе талант вĕсене халăх историйĕнче çапла картса хăварчĕ. Ик çĕмĕрт, ик юман, икĕ паттăр. Пурнăçри паттăрсем, поэзири Улăпсем.

Ёмёрсем иртсен те, чăваш халăхĕ пур чухне Иванов вăрманĕпе Çеçпĕл пахчинче Петĕр Хусанкайпа Ухсай Яккавĕн çĕмĕртлĕхĕсем чечекленме пăрахмĕç. Шăпа пӳрни çапла!

Пăтăрмах çаврашки. Ухсай Яккăвĕ 1939 çулхи раштавăн 19-мĕшĕнче чăваш çыравçисен союзне панă «Автобиографире» çапла калана: «1937 çулхи кĕркуннеренпе Патăрьелĕнчи педучилищĕре чăваш чĕлхипе литературине вĕрентнĕ. Çав çулах автомобиль катастрофине лекрĕм, вара сывлăх питĕ йывар пирки кирек мĕнле ĕçрен те пăрăнса юлтăм. 1938—39-мĕш вĕренӳ çулне Ульяновскри педагогика училищинче чăваш чĕлхипе литературин преподавателĕнче иртертĕм. Халĕ ялта пурăнатăп, литература ĕçне кăна тăватăп».

Кĕтмен инкеке лексе сывлăха хавшатнă, вара çулталăк патнелле ним ĕç те тăвайман-мĕн...

Çапла иртнĕ пулать нумай-нумай ăслă чăваш пуçне каснă çил-тăвăллă 1937—1938-мĕш çулсем. Чăннипе вара апла мар. Ун çинчен Я.Г.Ухсая пĕлекен çынсем сахалтан та пĕр виçĕ халапран кая мар каласа параççĕ. Паллах, аслă çынсем çинчен тухăмрах пысăклатса е пĕчĕклетсе шӳт те, халапюмах та çавăрса кăлараççĕ. Тепĕр чухне çыракан е вылякан çынсем хăйсем те хайла кăларма ăста. Çапах та, паллă сăвăç, тӳрĕ чунлă та самаях чĕрĕ чĕлхеллĕскер, мĕнле майпа-ха хаяр читлĕх хыçне лекмесĕр юлнă? Е Уйăп пек, Кипек пек, хăй те хăрушсăрлăх пайĕсенче ĕçленĕ? Е тата Элкерпе Шелепи пек ытла паллă та ватă пулнă? Элек парса пурăннă та, упранса юлнă теме çук. Элекçĕсене хăйсене те хыççăнах çаклатса кайнă.

Сармантей самани шеллесе тăман. Шăкăрин шăлнă. Ырă çыннах йытта кăларнă, хирĕç тăратса минкĕленичченвăрçтарнă. Митта Ваçлейĕ, Çĕпритун Шăпчăк, Василий Краснов-Аслипе Кĕркури Краснов-Кĕçĕнни, Николай Шупуççынни, Митта Петĕрĕ тата ыттисем умлă-хыçлă е ушкăнпах Çĕрпӳ, Шупашкар, Улатăр тĕрмисене, Çĕпĕре ăсаннă. 1939 çулхи çурла уйăхĕнче Петĕр Хусанкай суд аллинчен вĕçерĕнсе тухнă та йĕрне хăвармасăр Вăтам Азие вĕçсе кайнă. Тĕрĕслĕх çĕнтернĕ-им? Çук. Судйине хăйне хупнă.

Я.Г.Ухсай та 30-мĕш çулсен синкерĕнчен хăтăлса юлайман. Ăна та тытса хуптĕрленĕ, нӳхрепе антарса тĕпченĕ, урайне тĕшĕрĕлсе ансан тискеррĕн тапса тăратнă.

Йĕрлев хучĕсене тупса пăхаймарăм эпĕ. Ун пек япалана ал-хапăлах тыттармаççĕ. Пăхнă эпĕ шыраса Мĕтри Юман хучĕсене, Алексей Милли ĕçĕсене... 25 çултан кăтартрĕç!

Ухсай хăйĕн асилĕвĕсенче хăрушă вăхăт çинчен асăнать, тĕппи-йĕррипе çырни çук. Çав йывăр вăхăта вăл чунĕ тĕпнех пыгарса хунă пулĕ тетĕп. Пăртикне каласан нумайне каламаллах пулать. Унта вара сăмах сумлă çынсенех пырса тивет... Аслă çынсем пирĕнтен талантпа çеç мар, чун-кăмăл тирпейлĕхĕпе те расна, чăтăмлăхĕпе хăватлă. Ухсай чунĕнче мĕн чухлĕ хурлăх выртнине халĕ тин никам та пĕлеймĕ. Кăштах кăна хĕрĕсем пĕлме пултараççĕ, анчах вĕсем те халех каласа параймĕç.

37-мĕш çулхи допроссен йĕрки мĕнлине аса илме те кирлĕ мар. Кинори пекех. Сĕтел çинче пистолет выртать. Следователь, хăй сăвăпа роман мĕнне те пĕлме пултарайманскер, мăнкăмăллăн мăшкăллашса пуплет, хирĕç каласан ĕнсе чикки парать. Пĕтĕм кăмăлĕ тулса-тăвăнса çитнĕ Ухсай «вилсен вилем, мăшкăл курам мар» тесе шутлать те, следователь курнăçланса уткаласа çурене чухне сĕтел çинчи пистолета ярса илет. «Начальник своими допросами довел меня в октябрьскую ночь до бешенства. Вынул пистолет, кричал: «Застрелю!» Накричавшись до хрипоты, он устало положил пистолет на стол. Я этот пистолет взял, приставил ко лбу начальника и сказал: «Подпишите мне разрешение на выезд из вашего района». И он подписал нужную бумажку» (Ухсай В. Туркин патне 1980 çулхи чукĕн 14-мĕшĕнче янă çыруран, «Сов. Россия», 1988, 7 сент.).

Çĕрле тулли тиевлĕ машина çинче ларса пынă чухне Ухсай шăнса хытнă, Çĕрпу патĕнче йывăç айне пулса кăкăрĕпе пĕçĕ çыххине амантнă. 1937 çулхи юпан 16-мĕшĕнче утайман «тăшмана» чăваш хĕрĕ урапа çине хурса сыватăша илсе пырса хунă. Палатăра «халăх тăшманне» вырăн паман. Урайне пăрахнă. Çавăн чухне ăна пăхакан тухтăр, юнлă суранĕсем çуккине тĕрĕслес е юри хăтланать тесе-ши, Яккăва хыçран лаплаттарнă. «Халăх тăшманĕ» юриех пăлахая перет тенĕ пулинех Айтар пек тĕреклĕ çав тухтăр...

Çерçи пек сиккелекен пулсанах Ухсай сыватăшран тухса тарнă. Кам шутланă вăл çав хаяр вăхăтра Улатăра тарса каясса? Унта Çĕнĕ çула хăйĕн варлийĕпе Надежда Чебадинăпа кĕтсе илме тахçанах калаçса татăлнă-мĕн. Шаннă кайăк йăвара çук.

Çыру-телеграмма пулман пирки-тĕр пуйăс патне тухман вăл. Пурнăç шутланă пек çаврăнман.

Улатăрта ун чухне 2-мĕш типографи ĕçленĕ. Унта чăвашла кĕнекесем те çаптарнă. Ухсай кĕнекисене те (сăвă пуххи, «К.В.Иванов» т. ыт.) Улатăртах калăплана. Тен, çавăнта каймалла?

Нуша пулсан этемĕн телей те пур. Хăйĕн студенчĕсене кĕтсе илме тухнă чăваш художникĕ, писательсемпе пит тусла пурăннă Александр Мясников вакунран уксахласа анакан Силпи шăпчăкне палласа илнĕ. Малтан — хăй патне, ăнакăна пĕлнĕ хыççăн вара Пушкăртстан чăвашĕ, палла ӳнерçĕ Иван Трофимович Григорьев патне илсе кайнă. Пĕр-пĕрне виççĕшĕ аван пĕлнĕ. Поэт тусĕсем Улатăрти илемлĕх вĕрентĕшĕнче ĕçленĕ. Александр пĕччен пурăннă. Пĕччен çын ĕçрен пăрăнса теприне пăхса ларайрас çук. Апатне те пĕçерсен пĕçерет, вуттине те шăнсан кăна хутать...

Ухсай ентешĕн вĕри кăмаки çинче сывалнă. Ют сасхура пулман. Сăввисене шкул кĕнекисенчен тăпăлтарса кăларман. Ахăртнех, леш йĕрлевçи «самодеятельнăçпа» палăрас тесе янăрашнă пулмалла, Ухсай хăйне ухмаха хăварнă хыççăн пуçлăхсем умĕнче шавласа кайман...

Ури сипленсен, хĕл хаярĕ хуçăлсан поэт Улатăртан кăнтăралла тухса кайнă. Çĕнĕ вĕренӳ çулне вăл Чĕмпĕрти чăваш шкулĕ пулнă педагогика вĕрентĕшĕнче пуçланă. Кунта Мария Мухина вĕрентӳçĕпе паллашнă. Пĕрлешнĕ, хĕл каçнă хыççăнах, Мария Дмитриевнăран маларах, пăрахутпа, Сĕнтĕрвăрри урлă Карача хăпарнă. Мĕншĕн апла тунă-ши? Сăвă çырма Ухсая Пушкинăн Болдини пек Карач кирлĕрен-ши? Паллах, апла мар.

Ухсай сас паманни урăхла шухăшлаттарать. Иван Трофимович ентешĕ çинчен чылай хушă пĕлмесĕрех пурăнать. Вара Шупашкара, писательсен союзне çыру ярать: «Мĕнле санăн сăвăç чунĕ? Тĕксĕм шухăшсем пусмăрламаççĕ-и? Эсĕ — тĕрĕслĕх ӳнерçи, чуну санăн тĕрĕсех-и? (правдива ли твоя душа?). Мĕншĕн эсĕ кăштах сивĕ? Эсĕ, сăвăç, мĕн-ма пĕтĕм чунтан юрламастăн? Юрла тата хăватлăрах, юрла хăвăн янăравлă сассупах! Салампа Ваня, салам сана Лизăран. Улатăр, Лермонтов урамĕ, 46. 1938 çулхи утă уйăхĕн 26-мĕшĕ».

Ырланă та, ятланă та, хушнă-ыйтнă та. Тĕрĕссипе, Сармантей хаччи хĕссе лартнă лару-тăрура Пушкăртстан

чăвашĕ çырăва пит аван ăнланнă пулĕччĕ: чĕрех-и эсĕ, сăвăç? Хыпарла сассу ирĕклĕ пулсассăн.

Çыру çитмен. Ухсай хурав яман.

Çитмен çырусем. Я.Г.Ухсай хучĕсем пĕр çĕре пуçтарăнман-ха. Чăваш патшалăх гуманитари ăслăлăхĕсен институчĕн архивĕнче Ухсайсен килĕнчен килнĕ хутсем çук. Вăрçăчченхисенчен — «Тутимĕр», «Ĕмĕт», вăрçă хыççăнхисенчен «Вырăс ачи» хайлавсен алçырăвĕсем, темиçе сăнукерчĕк пур. Тĕрлĕ çĕре янă çырусем (М.Уйăп, Хв.Уяр, В.Долгов, Я.Рогачев, Н.Дедушкин патне янисем) тата Я.Г.Ухсай патне ытти çынсем яни — нумаях мар. Килти архивĕ ăслăлăх çыннисен куçĕ тĕлне пулманни академилле тĕпчев çырма чарса тăрать. Поэтăн паян тĕпчевçĕ аллине лекме пултаракан чăнлавсен хапине ăнкарса илмесĕр çырни — ыранах суяна тухса юлма пултарас ĕç. Поэтăн 100 çулĕ тĕлне ку йывăрлăха çĕнтермеллех тесе шутлатăп.

Я.Г.Ухсай тăванĕсен çырăвĕсем, ахăртнех, килти архивра выртаççĕ, чылайăшĕ сапаланса пĕтнĕ. Çĕтме те пултарнă. Çилçунатçă-студентсем Куславкка районĕнче çĕрулми пуçтарса пурăннă чухне пĕр çулхине çумăр-пылчăк айĕнчен Ухсайсен хучĕсене тупса килнĕччĕ (вĕсене эпĕ Слакпуçĕнчи музее патăм). Çухалман çырусем — тĕпчевшĕн паха хутсем. Уйрăмах паллă çын тавринчи хут пулсан. Тупăнтăр-ха халĕ Пушкинпа Лермонтовăн е Толстойăн çĕнĕ çырăвĕ е ун çинчен тăванĕ çырнă хут! Хаçат-журнал тăрех шавласа кайĕ. Пирĕншĕн Çеçпĕлпе Хусанкай, Ивановпа Ухсай ячĕсемпе çыхăннă хутсем те паха пулма пуçлĕç-ха. Çапла пултăр тесе хытă тăрăшсан. Чăваш ăс-хакăлĕшĕн чуна парса ĕçлесен. Мĕскĕнлĕхрен тухма хăват çитерсен.

Вуласа пăхар-ха Я.Г.Ухсай тăванĕсен çырăвĕсенчи хăш-пĕр йĕркесене. Вĕсем Тăван Çĕршывăн аслă вăрçи умĕнхи репресси чĕмне лайăх кăтартаççĕ. «Халăх тăшманĕсене» лăскăнă чухне çеç çакăн пек çырусем çуралма пултарнă.

П.Е.Алексеев, пиччĕшĕ, Ĕпхăрен— Чĕмпĕр хулине, 1938, чăкĕн 20-мĕшĕ:

«Якку! Сана ăшă тумтир тăвас йĕркепе, стол-заказран мĕнле те пулсан аванрах сукна илсе, пальто çĕлетес тетĕп. Сукнине илсен сан патна хам та çитме пултарăп. Урăх нимех

те тупма çук. Эсĕ калакан сăран пальто хĕллешĕн çителĕклĕ ăшă тытаймасть. Эп шутланăччĕ, элле, вăхăтлăха хамăн хура кĕрĕке пама, анчах вăл питĕ пысăк, пĕрми купарча çине анса ларсан тумтирĕн ним илемĕ те пулмасть...

Лиза çырать... Лизана Уфана куçса килсен те юрать. Ман уйпа, Наркомземра ăна валли вырăнсем питĕ нумай... Кирле çырса пĕлтерчĕ хăйĕн пурнăçĕ çинчен. Халь пирĕн пата ларма килме хатĕрленет хамăрăн Улькка. Сывă пул. Пиччӗ».

1939, карлачăн 16-мĕшĕ:

«Сан патна хам пыраймастăп пулĕ, Якку. Кирлех пулсан, хром-реглана сан патна ярас пулать. Ху килмесен почтăпа е пыракансенчен парса ярăп...» Анчах Ухсайран хурав çук. Милицире ĕçлекен пиччĕшĕ çакна сиснех ĕнтĕ... Унăн та чунĕ çуннă.

1938, Слакпуçĕнчен, хутла пĕлмен ашшĕпе амăшĕ пĕр хĕре çапла каласа çыртарна:

«...пирĕн патран кайнăранпа çыру та ямастăн. Эпир кăçал питĕ хĕнпе пурăнатпăр. Виçĕ ывăлтан пĕри те çук. Çапах та вут илтĕмĕр. Пиччӗ килчĕ те 100 тенкĕ парса хăварчĕ, парăм парса пĕтрĕ. Сирĕн те пăртак пулăшас пулать, эсĕр те пулăшмасан кам пулăшĕ? Кирле пур чухне чукункана* каяканччĕ, кăçал вăл та çук укçа тума. Ачасен пĕр тумтирĕсем çук. Униççен те тăхăнмалли çук ним те. Кăçал тырă паман-ха пире, Çĕнĕ çула тин параççĕ пуль... Кирлерен 3 çыру килчĕ, унта та укçа ямаллаччĕ, хĕнтерех пурнатăп тенĕ, яма укçи çук».

Ятне çырман хĕр, хутла вĕрентекенскер, юлашкинчен çапла хушса хунă: «Ман çырмалли пĕтрĕ. Çыру çитсен çыру яр, аçупа анну питĕ кĕтеççĕ. Укçа яр обязательно. Эпĕ сан йăмăкусене вĕрентекен ликвидаторница. Санăн йăмăкусене тепĕр çул çыру ямалла тăвас тесе вĕрентетĕп...»

О.Г.Никифорова, Слакпуçĕнчен, 1939, пуш уйахĕн 4-мĕшĕ:

«Хальхи вăхăтра пирĕн пурнăç питĕ начар. Анне йывăр чирлĕ... Эп чейсем туса ĕçтертĕм, йывăр выртать, «хама йывăр вăхăтра никам та пулăшаканни çук» тет... Çавăнпа, пичче, санран ыйтатăп çак çырăва илсенех пирĕн пата çыру яма, если вăю пулсан пăртак пулăшма. Çырать Никифор. О.»

Е.Г.Никифорова, Туймазаран, 1939, ака уйахĕн 17-мĕшĕ:

---

* Чугун çул çине.

«Эпĕ хальхи вăхăтра ĕçлетĕп Туймазара госстрахфондра агроном пулса. Нумай пулмасть киле кайса килтĕм... Якку, эсĕ киле пĕр çыру та çырмастăн иккен!

Тата питĕ ĕçни çинчен Ульяновскран килсе кайнă пĕр çын каласа хăварнă ялта. Питĕ шанма хĕн çавăн пек сăмахсене. Нихçан та уйламан пирĕн тăван çапла пулĕ тесе. Якку, чăнахах çапла пулсассăн, эсĕ хăвăн сывлăхна пĕтерен, хăвна ху аламана кăларатăн тата аттепе аннене çунтаратăн. Ахаль те вĕсем ватăлса пĕтнĕ. Тĕрĕсех пулсассăн çын сăмахĕ, вĕсем çунсах, макăрсах вилĕç... Якку, аттепе анне патне хитре кăна çыру çырса яр, савăнса кайччăр. Вĕсем халĕ питĕ шухăшласа пăшăрханаççĕ. Килте сире Марусьăпа иксĕре кĕтеççĕ, пĕр хур усраççĕ. Кайса курăр...»

Шупашкартан, 1938, юпан 11-мĕшĕ:

«Якку! Сана шыраса тупма çук. Пушкăрта çыртăм, пиччӗ патне çыртăм — ответ çук. Ульяновска çитсен çырать пулĕ терĕм сана — çырмарăн. Халь татах çырса пăхас терĕм. Унтах-и эсĕ, Ульяновск педучилищинчех-и, çук-и? Çак çырăва илсен хăвăрт ответ пар.

Кунта сана çырусем пур. Протезнăй ботинкăсем килнĕччĕ. Хăв адресе пĕлмесĕр — пĕлтереймерĕмĕр. Почтăран каялла те ячĕç, те çук — илтмен-ха. Яма хушманччĕ.

Ытти хыпарсене кайран пĕлтерĕп. Адресне пĕлсен. Хăвăртрах çыру çыр. Çыру кĕтетĕп!

Салампа УЙĂП».

Мĕншĕн сас памасть Яков Гаврилович? Виç сăмах çаптарма йывăр-им ăна? Ăна Писательсен союзĕ шырать, ашшĕ-амăшĕ шырать... Улатăртан Ухсай сас парайманни паллă. Кайран та хура пĕлĕт пуç çинчех тăнă. Ухсая суда чĕнеççĕ — П.Хусанкай судĕнче кӳнтелен пулмалла-мĕн... Кайса пăх-ха! Çавăнтах юлатăн. Ыттисем пекех.

Г.Н.Никифоров, ашшĕ, Слакпуçĕнчен, 1940, утă уйăхĕн *12-мĕшĕ*:

«9 уйăх çитсе те пĕр çыру ямастăр... Темиçе çыру ятăмăр, пĕр ответ та ямастăр. Аптранă енне, кăçта кайса кĕчĕç-ши тесе хуйхăрса пăхатпăр...

Вот, Якку, кунта пирĕн положени питĕ начар. Колхозран тырă памаççĕ. Кайса ыйтсан «ывăлăрсем пур» теççĕ те кăларса яраççĕ. Вот пăртак эсир те пулăшаймасан справка

ярăр: «Эпир пулăшаймастпăр, хамăра та пурăнма йывăр», — тесе. Вара колхозран пулăшĕç-и, тен, пулăшмĕç-и?

Унисçе пиччӳсем патĕнче пурăнать...»

Гавриил Никифоров — колхозник, конюх, хуралçă. Вăл янă юлашки çыру ку. Кĕçех ӳнăн кун-çулĕ татăлать. Ăна сисет вăл («хамăр та кирлĕ пулăпăр, анчах эпир пулмăпăр...»).

Поэтăн чунĕ мĕнле чăтнă-ши? Пулăшма е «хам та чухăн пурăнатăп» тесе евтӳ яма пултарнă-и вăл? Çук. Ун чухнехи лару-тăрăва хальхи яшсем ăнкараймĕç. Аслăраххисем пĕлеççĕ.

Я.Ухсай мĕнле майпа «халăх тăшманĕ» пулса пуçиле кайманни паллă ĕнтĕ. Элкер, Шелепи, Чулкаç, Шавли, Эсхель пирки иккĕленӳ çук. Теприсем пирки те лару-тăру уçăлса пырать.

Чылай-чылай кайран, 1974 çулта, Я.Ухсай кун кĕнекине çырса хунинчен: «Лисаран çыру илтĕм. Манăн мĕскĕн ватă аппапа суккăр йăмăк аран-аран пурăнаççĕ, пӳртне хĕлле юр хӳсе кайнă, пӳрт тăрринче качакапа путеккисем тăраççĕ тет. Манăн пурнăç пĕр вăхăтра та ăрăскаллă пулса курăнмарĕ. Халĕ те, инкек çеç пулин те, савăнăç çинчен çырмалла. Пурнăç мар, политикăри карьеристсен шухăшне пăхăнса курнă тĕлĕк».

Мĕтри Юман пурнăçĕ, унпа калаçнисем тата сыхлăх ĕçĕнчи пиччĕшĕ Прокопий Алексеев майор витĕмĕ Ухсай Яккăвне упранса юлма вĕрентнĕ. Ăслă этем тăшманран та ăслăрах. Çур ĕмĕртен тин кăштах сирсе кăтартрĕ поэт хура кунсен синкерлĕх чатăрне.

Олень-Колодезь: Ухсай хатти. ...Мускаври Хĕрлĕ тӳремре çулсеренех çар парачĕ ирттеретчĕç. Хăватлă танксем кĕрлеме пытăнсан инçекурăмпа: «Кантемировка гварди танк пĕрлешĕвĕ пырать!» — тесе калатчĕç. Çавна илтсен кашнинчех Ухсай Яккăвне аса илеттĕм. Вăл çак ушкăн гвардеецĕ. 1942 çулхи раштавра 17-мĕш танк корпусĕ Дон хĕрринчи хаяр çапăçусенче чăрсăрлăх кăтартса малтан Кантемировка станпине туртса илнĕ, унта чарăнса тăмасăр Донбаса талпăнă, Сталинград патĕнчен чакма тапаçланакан нимĕç çарĕсен çулне пӳлсе хунă. Ухсайăн «Чăваш салтакĕсен фронтран янă çырăвĕ» хальхи атом станцийĕллĕ паллă хула — Çĕнĕ Воронеж патĕнчи Олень-Колодезь ялĕнче çырăннă.

Çĕкленўллĕ, тапса тăракан шанчăкпа çуралнă вăл. Пĕтĕм чунхалалпа кĕтнĕ çĕнтерў ялавĕ Яков Ухсая — Кантемировка танкисчĕсемпе пĕрле çапăçăва кĕрсе курнă сăвăçа — ăмăрткайăк çуначĕ пек çĕклентерсе тăнă. Вăл çулсем çинчен Яков Гаврилович «Коммунизм ялавĕ» хаçат редакцийĕнче тек-текех каласа кăтартатчĕ.

1975 çулта, Аслă Çĕнтерў 30 çулне палăртнă вăхăтра, 141-мĕш дивизи ветеранĕсемпе хаçат редакцийĕнче тĕлпулу иртгертĕм. Çав инçетри вырăнсене çитсе килме шут пурччĕ. Дивизии Чăваш çĕршывĕнчи салтакĕсене Яков Гаврилович каласа панисем тăрăх шыраса тупрăм. Малтан «Салтаксен çырăвĕнчи» паттăрсем сас пачĕç. Пĕри — Элĕкри Василий Антонов паттăр Мартынкассинчи шкулта вĕрентетчĕ. Ăна таврипех пĕлеççĕ. Вăл поэма геройĕ, винтовкăпа нимĕç «Юнкерсне» персе антарнă разведчик. 1942 çулхи çĕртмен 16-мĕшĕнче «Родина зовет» хаçат «Боец Василий Антонов сбил вражеский самолет» аншлагпа уçăлнă. Ун çинчен Я.Ухсай «Чăваш коммуни» хаçата «Çапăçури туслăх» тĕрленчĕк çырса янă. Вăл та пичетленсе тухнă.

Шупашкартах Я.Г.Ухсай хутшăнса пурăнакан «Дон салтакĕсем» Михаил Кудрявцев вăрманçă, Борис Филиппов агроном, Шупашкар çывăхĕнчи ялтан Михаил Степанов колхозник тупăнчĕç. Я.Г.Ухсай вăрçари юлташĕсене вăтăр çултан та пĕлсе тăратчĕ. Ăсĕ вичкĕн, чĕри аслă пулнă çав унăн! Ют çынна курăнман, анчах унпа тăванла каласса ларнă çынна ăшĕнчи пысăк хурлăхĕ, геройĕсен йывăр шăпи хăйĕн шăпи пулса тăни сисĕнетчĕ. Çывăх çыннисем çавна вăрçă хыççăнах асăрхама пуçланă — тус-юлташĕсене çухатни поэт чĕрине касса, куçĕсене хурлăх сапса хăварнă.

Сăвăç пирĕнпе инçе çула пыраймарĕ. Чирлĕччĕ. Тем курасси пулĕ тесе ямарĕç ăна. Хăй пыратчех-ха вăл, каяс тесех хатĕрленнĕччĕ!

Çĕнĕ Воронеж атом станцийĕ дивизи ветеранĕсене ытти çĕртен те чĕнсе илнĕ, пысăк уявах йĕркелерĕ. Врачсем, летчиксем, артиллеристсем йышлăччĕ, танкистсемпе пехотинецсем вара — ытла та сахал. Батальонран, ротăран мар, полксенчен те паллакансем тĕл пулаймаççĕ. Салтак пĕр çапăçăва валли кăна çав, пĕринчен юлни тепринчен чĕррĕн тухайман. Хаяр пулнă çав вăрçă.

Ветерансем тĕлĕнмеççĕ. Ман шутпа, çав тĕлпулура пехотăшăн савăнăçран ытларах хурлану пулчĕ. Мĕн чухлĕ паттăр тус-юлташ выртать эпир утса çурекен тăпра айĕнче! Кашни утăмрах, кашни тĕм çинчех, теççĕ ватăсем.

Малтанхи кунах пирĕн пата чат чăвашла калаçакан, тулли кĕлеткеллĕ те çулĕсене кура мар хăтлă курăнакан полковник пырса тăчĕ. Тула хулинче пурăнать-мĕн Самар облаçĕн Исаклă районĕнчи Çĕнĕ Якушкел ывăлĕ Сергей Игнатьевич Карандаев. Леонид Родионов драматург-режиссер ентешĕ-мĕн. Полковник турех: «Сирĕн хушăра Яков Ухсай пур-и?» — тесе ыйтрĕ. Вăл килейменнине пĕлсен хытах кулянчĕ. «33 çултан тепре курас тесеттĕм», — терĕ. Иккен, вăл чăваш поэчĕпе 1942 çулхи хаяр сивĕ уйăхсенче çакăнти çара çеçенхирте пĕрле çуренĕ, пĕр хатăра выртса-тăрса пурăннă. Ун чухне çап-çамрăк каччă Сергей Карандаев дивизи командирĕн адъютанчĕ пулнă. Унăннах дивизи хаçачĕн хыпарçине Ухсай Яккăвне пулăшма тивнĕ. Ухсай вăл кунсенче, икĕ вутлă çапăçу хушшинчи тăхтав вăхăтĕнче, «Пĕр дивизири чăваш боецĕсемпе командирĕсем чăваш халăхне çырнă çыру» хайланă. Çĕнĕ çавра çырăнсанах Сергей «Çырăва» сасăпа вуланă. Вăл хăйне ăмăрткайăк пекех туйса тăнă.

Ăмăрткайăк, тăван халăх, вăрçăри ачусенчен
Йышăн эсĕ чун-хавалла çырăва Дон хĕрринчен!
Тăван халăх, ăмăрткайăк! Санăн чăрсăр чĕппусен
Фронтсенче — ăçта çеç кайăн — янăраççĕ ячĕсем!

Сергей Карандаев сăвва пăхмасăр астăвать. Вутпа хĕрсе çырăннă ку йĕркесем унăн яшă пуçне. Виличчен те тухмĕç. «Сталиншăн! Тăван Çĕршывшăн! Кайрăмăр кĕпĕрленсе» тенĕ йĕркесене вăрçă хыççăн поэт турлетсе тухрĕ, 70-мĕш çулсем ыйтнă пек турĕ. Поэма çĕнĕрен пичетленни Сергей Игнатьевича савăнтарчĕ, вуласан — пăшăрхантарчĕ. Вăл хăй çамрăк чухне вĕреннинех каларĕ:

Мухтанма пулать чăвашăн
Ачисем маттуррипе:
Сталиншăн! Тăван Çĕршывшăн!
Çапăçаççĕ пинĕпе!
Тăван халăх, ăмăрткайăк,
Эсĕ шан ачусене!

Çыру 1943 çулта Шупашкарта кĕсьене чикмелли пĕчĕк кĕнекен пичетленсе тухнă.

Ун чухне те килĕшнĕ, халĕ те эпĕ С.И.Карандаев фронтовикпа килĕшетĕп. Вутра çуралнă «Çыру» (вĕçленнĕ-и вăл, вĕçленмен-и, яка-и, яка та мар-и) истори чăнлăхĕ пулса юлнă. Юлтăр çаплах! Унти чĕнӳсем 70-мĕш çулсенчи чĕнӳсемпе тӳрĕ килменнишĕн пин-пин салтак ячĕпе калаçакан поэт айăплă мар. Вăл чăнласа, çав туйăм кирлине пĕлсе çырнă. Вирлĕ, чуна тивекен, йĕрекен ăш-чике лăплантарса хавхалантаракан, ӳкнĕ çĕртен тăрса малалла утма хистекен поэма. Мĕне тăрать пĕтĕм халăха ăмăрткайăкпа танлаштарса илни! Çавă кирлĕ пулнă çĕнтерӳшĕн, çавна кĕтнĕ выçă-тутă пурăнакан амăшĕсем, арăмĕсем, ачи-пăчи!

Я.Ухсай пурнăçĕпе пултарулăхĕн кукри-макрине кĕрсе тухнă çыншăн поэтăн вăрçăри паттăрлăх пафосĕ те, сăввисенче йынăшу çукки те ăнланмалла. Макăрашу ун чухне кирлĕ пулман! Ахаль те куççуль нумай чухне йĕрсе ларнине камăн пăхас килет? Театрсем тулăх пурнăçпа пурăннă чухне драмăсемпе трагедисем лартатчĕç — халăх кĕпĕрленсе çӳретчĕ. Пурнăç пăтранса кайсан, укçа-тенкĕ çитми пулсан, çĕршыв аркансан чăваш театрĕсене (вăрçă хыççăнхи пекех) камитсем хупласа илчĕç. Вĕсене куракан хапăлласа пăхать, «Çатан карта çинчи хура çырласене» (трагедисене) унăн пăхма хăвачĕ çук. Пурнăç тарасин саккунĕ çакă. Ӳнер пурнăçра пуррине ӳкерсен те, халăха халь çукки ытларах кăсăклантарать.

«Эпĕ фронт тăрăх çӳре-çӳре ирттертĕм вăхăта... Сăвăсем пирки ан ыйт та — пуçра пĕр рифма та çук... Салтакăн ăсĕ тусанран çӳле хăпарма пултараймасть. Тусан ăшне кĕртсе лартсан, шăпчăкпа уйăп юрлама мар, çерçи те чĕриклетеймĕ», — тесе хыпарланă 1943 çулта Ухсай Мускавра хĕсметре тăракан Уйăп Мишшине. «Инкек сиксе тухрĕ. Шинеле вăрларĕç, халĕ шăнса çӳретĕп... Ёмĕрте яланах хаваслăн кулма тăрăшрăм пулсан та, манăн пурăнăç йывăр пулчĕ, шалтан, чĕререн хам ватăлнине сисетĕп эпĕ» (ЧПГАИ ĂА, V, 312, 2251). «Çыру» поэмăра шăнса çӳренисем мар, тусан айĕнче тĕмсĕлсе выртнисем те мар, пачах урăххи — паттăрлăх, çĕклену хуçаланать. Ухсай «Çырăвĕ» — тĕнче литературинчи героика поэзийĕн паха тĕслĕхĕсенчен пĕри. Çавăн йышши сăвăллă çырусем ытгисен те çуралнă. Анчах истори Джамбулăн

Ленинграда янă çырăвне, Ухсайăн чăваш халăхне янă поэмине астуса юлнă. Ман шутпа, поэтăн 100 çулĕ тĕлне «Çырнисен пуххине» хатĕрлемелле, унта «Пĕр дивизи салтакĕсен Çырăвĕ» малтанхи тĕслĕхĕпех кĕрсе юлмалла.

Ветерансене çапăçу вырăнĕсем тăрăх хăйсен кăмăлне кура экскурсире пулма сĕнчĕç. Пĕрисем Коротояк плацдармĕ пулнă çĕре кайрĕç. Теприсем Давыдовкăпа Сторожевойне е Костенкине çул тытрĕç. Халĕ пирĕншĕн ку ятсем нимĕн те мар, вырăн ячĕсем. Пин-пинрен эпир пĕлменнисем. Çырса хунисене вуласан, каланисене итлесен — кусем пурте çав салтаксен юлашки Бородино е Крюково хирĕсем. Кунта вĕсен тĕнчи, яшлăхĕ, ĕмĕчĕ, ĕмĕрĕ.

Сергей Карандаев полковникпа Олень-Колодезь ялне, поэтпа иккĕшĕ пурăннă яла, кайма палăртрăмăр. Кунта «Çыру» çуралнă. Кунта икĕ чăваш ытти чăвашсене пухса калаçнă.

Çеçенхир енĕ сисĕнет. Пысăк та пуян станица, анчах 1975 çулта та вăрçă йĕрĕ сапланманччĕ-ха. Паллах, хăнасене çĕннине кăтартаççĕ: çĕнĕ шкул, çĕнĕ сыватăш, çĕнĕ асфальт... Хăнисем çĕннине курсанах хăйсен пуçĕсенче юлнă тăкăрлăксене, шырлансене аса илеççĕ, çав вырăнсене илсе кайма ыйтаççĕ. Эпир те, автобуса тĕп çултан пăрсах, ялтан самаях аякра курăнакан йывăçсем патнелле чуптартăмăр. Сергей Карандаев çурт хыççăн çурт палласа илет: «Кунта полк штабĕ тăратчĕ», «Кунта — дивизи командирĕ», «Госпиталь пулнă вырăн»...

Çитрĕмĕр. «Акă вăл Ухсай хатти!» Пĕчĕк кăна, тăм сĕрнĕ, халĕ ĕнтĕ йăшса çитнĕ çурт. Полковник пурт патне çамрăк çын пек хăвăрт утса кайрĕ, вăрçă хурăнĕсем халĕ те пурăннишĕн савăнчĕ... Эпĕ фотоаппарата тытса сăн çапса илетĕп. Салтак аллине сулать, карттусне хывса тытать те çаврăнса тăрать. Хурланăç та хуплаpĕ ун чунне, куççуль пăчăртанса тухрĕ, кĕмĕл тумлам тусан çине ӳксе çĕре сăрхăнса кĕчĕ...

Вăрçăран тăрса юлнă хата! Урам речĕпех пулсан та, вăл халĕ ыттисенчен аякра, хирте пĕччен ларать. Çунтарса-аркатса пĕтернĕ ытти пушă вырăнсене йышăнманччĕ-ха...

Эпир Ухсай хатти патĕнче пулнăранпа нумай çул иртрĕ. Унтанпа поэт çурчĕ юлман та пуль. Анчах Олень-Колодезь пур! Салтаксен «Çырăвĕ» те пур.

Поэмăна Сергей Карандаев 60 çул пăхмасăр калать. Манмасть. Мăнукĕсем те манмĕç.

Слакпуçĕнчи шурă хурăнпа калаçнă чухне Олень-Колодезь станицинчи хурăнсем поэт куçĕ умĕнчен кайманах ĕнтĕ. Ăçтан манăçайччăр вĕсем, вилнисен асне упрама юлнă тăлăхсем?

Хисеплĕ çилçунатçă. И.Н.Ульянов ячĕллĕ Чăваш патшалăх университетĕнче пĕр вăхăтра «Çилçунат» ятлă литература пĕрлешĕвĕ лайăх ĕçлерĕ. Унăн ларăвĕсемпе уявĕсене Шупашкарти ытти аслă шкулсенчен те яш-кĕрĕм кĕпĕрленсех çÿретчĕ. Студентсем патне тĕлпулăва пыман çыравçă юлман пулас. А.Алга, М.Илпек, П.Хусанкай, П.Осипов, А.Кăлкан, С.Шавли... Яшăраххисене шутласа та пĕтереймĕн. Ухсай Яккăвĕн хăйĕн пултару шкулĕ (семинарĕ) икĕ çул ĕçлерĕ. Пĕр ларăва та поэт сиктермерĕ. Ун пекки, ман шутпа, вăл шайри çыравçăсен питех те сайра пулать. Çавăнпа Ухсая 1977 çулта «Хисеплĕ çилçунатçă» дипломне патăмăр.

Я.Г.Ухсай 70 çулне хатĕрленсе ирттернĕ тĕлпулу асран тухмасть. Унччен пулманла хĕрÿ иртрĕ. Студенчĕсем те хастар, мĕншĕн тесен вĕсен «Ухсай Яккăвĕ тата унăн пурнăçĕпе пултарулăхне шкулта вĕрентесси» ăслăлăх конференцийĕнче тухса калаçмалла: ячĕсем паллă, программине типографире пичетлесе хунă. Ухсая вуланăçемĕн ыйтмалли тупăнсах пырать вĕт!

Пытармасăрах калăпăр: поэт тĕлпулăва хĕрĕнкĕрех пычĕ. Ыттисем ун пек чухне чире персе килтен тухмастчĕç. Палăртнă япалана урăххипе темиçе те ылмаштарма тивнĕ (ун чух инçекурăм ялан тенĕ пек ÿкерсе илетчĕ, çавăнпа «ырана» хăварайман).

— Так, юрĕ, паян эпĕ кăштах сыпрăм. Хăвăр куратăр, сивĕ çанталăк. Салтакранпа юлнă йăла, нарком çĕр грамĕ...

Яш-кĕрĕме ăнлантарма тивет, «нарком сто грамĕ» мĕнне пĕлмеççĕ.

— Малтан хамăн калас килнине калам, вара ыйтнисене хуравлăп.

Яков Гаврилович эпитетсемпе рифмăсем çинчен мар, Чăваш çĕршывĕнчи, уй-хирти, ялти, вăрманти, çынсем хушшинчи лару-тăру çинчен каларĕ. Лăпăсрах курткăпа (ăшă тытаканскер марччĕ пулмалла вăл), сĕтел кĕтессинерех ларнăскер, пуçне пĕкерех, вăхăт-вăхăтăн ачасем çине тинкерсе пăха-пăха илсе, пĕр вăрăм монологах каларĕ.

Экологи пирки çырнисене вуланăран, уй-хир, вăрман, шыв-шур пирки тарăхнине, Аркадий Айдака ырланине, паллах, пурте алă çупсах йышăнчĕç. Ыттине йăлтах ăнланмарĕç пулĕ тетĕп. Мĕншĕн тесен пысăк çынсене хушаматпа каламастчĕ, хăйĕн синекдохисемпе, анлă аллюзийĕсемпе палăртатчĕ.

— Так, культура ыйтăвĕпе кĕрсе тухрăм пуçлăхсем патне. «Паровозник» тăрăшать, Мускава кайса килнĕ. Опера театрĕ валли укçа тупнă, — терĕ. — Литература валли ним те çук. «Такана хырăм» çултен хушнине итлет. Салтак пек. Литературăна шалтан аталанма вăй кирлĕ. Пĕр пек япаласем нумай. Вырăссенчен юлатпăр. Твардовский, манăн тусăм Твардовский, Старшинов, Исаев... Саввăмсене аван куçарнă. Мухтаççĕ-ха. Философилесе çырни сахал. Чĕлхене пĕлмеççĕ. Халăхра çуремеççĕ. «Кĕске ураллипе» уй-хир ăкерчĕкĕсем туса килтĕмĕр. Кĕнеке кăлармалла. Обком секретарĕ патне кĕрсе тухрамăр. Ăнланмасть. Футбол вратарĕ пекех каялла тапса ячĕ пирĕн шухăша. Так, юрĕ, вратарьсем те кирлĕ. Футболла вылятăр-и-ха?

Эпĕ «вратарь», «такана хырăм», «паровозник», «кĕске ура» камсене пĕлетĕп те, куç-пуç вирелле тăрса пырать. Лекет ĕнтĕ пире, литпĕрлешĕве хупса та хураççĕ тесе шикленетĕп. Чĕнтерсен йĕркипе аса илме — мĕн калаçнине хут татки çине «тĕрев сăмахĕсемпе» палăртса хăваратăп. Вăл хут татки халĕ те упранать-ха. Чĕнтермерĕç.

— Галимзян Ибрагимова Ялтăра тĕл пултăм, — монологне малаллах тăсрĕ Яков Гаврилович. — Мажит Гафури пирки калаçса кайрамăр. Эпĕ Гафури патĕнче пĕрре мар пулнă. Наджми, Туфан, Муса Джалиль — вĕсемпе калаçнисем асра. Кашнин çинчен статья çыратăп...

— Аркадий Хараç-и? Соловьевка поселокĕнчен. Хушăлка патĕнчен. «Колхозри ĕç» хаçатра ĕçлерĕ. Мана та пичетлерĕ. Пуçĕ лайăхчĕ. Теприсен пуçра варвитти ытларах, вăрăм та пăтранчăк çыраççĕ. «Тăван чĕлхе чĕрене ырлăх парать», — тенĕ Калинин. Чĕлхесĕр ăс çук. Мĕншĕн пăтранчăк? Чее е ухмах, çавăнпа, пăтранчăк. Аркадий Хараç вăрçăра вилчĕ. Шăллăм та вăрçăра пуç хучĕ. Вăрçăра вилнĕ юлташсем манăçмаççĕ. Тĕлĕкре те куратăп вĕсене. Сăвва кĕреççĕ. Кирлене те сăвва кĕртрĕм. Поэма пулса тухрĕ. Кирле — ман юратнă шăллăм...

Çăраччĕ Ухсай калаçăвĕ. Кашни пуплевĕнчен тепĕр калаçу кĕрсе кайма пултаратчĕ. К.В.Иванов несĕлĕ пирки тĕплĕ каларĕ. Пăртта йăхĕнчен, писарь Çимунтан поэт ашшĕ Кевриш. Тăван тивекен Митрюк, Евкен, Ваçинкка, Вихтăр ачи-пăчи пуррине каласа пачĕ.

«Çилçуната» поэт ырларĕ. Слакпуçне çитсе çуренисемшĕн, Карачра пулнишĕн, хăш-пĕр хутсене тупса килнишĕн тав турĕ. Хаçатсем, типтерсем (тетрадьсем) çине алă пусса пачĕ. «Чĕмпĕр» поэмăн вараланса пĕтнĕ алçырăвне текстологи вĕренме хăварчĕ.

Ухсай яш-кĕрĕме юрататчĕ. Хăй яш чухне вĕрентĕшсенче ăс пани асĕнче çирĕп юлнă пулмалла. Лайăх вĕрентуçĕ пулнă. Вăл вĕрентнĕ ачасен ырă сăмахне темиçе те илтнĕ, вуланă та. Ухсай Чĕмпĕрте хăй те литература кружокне ертсе пынă. Çакна эпĕ унăн вĕренекенĕ, вăрçăра пуçне хунă пултарулла сăвăç Алексей Наржин çырăвĕнчен пĕлтĕм.

Студентсен ăслăлăх конференцийĕ çакăн пек калаçусем хыççăн вирлĕ иртесси турех паллă. «Ульяновец», «Советская Чувашия», «Коммунизм ялавĕ» хаçатсенче çырчĕç студентсемпе Ухсай туслăхĕ çинчен. Нумайăшне парнесем тивĕçрĕç: докладсемшĕн — Олег Печникова, Анатолий Абрамова (халĕ университетра вĕрентеççĕ), Альбина Степановăна (Чĕмпĕрти чăваш хаçатĕнче тăрăшать), Николай Сидорова (драматург пулса тăчĕ). Конференци ячĕпе хаçат кăларнăшăн Татьяна Ильинана ырланă (Инçекурăмра «70 те 7» кăларăмпа палăрчĕ), сăвăсемшĕн — Анатолий Смолина, тĕслĕхсемшĕн — Алина Сосаевăна... Манман пулĕ-ха çав çилçунатçăсем хăйсен «Ухсай вулавĕсене».

Ухсай кĕнекисем ĕмĕрсене юлĕç. Хăйне курса вуланă çынсен асилĕвĕсем те кирлĕ. Кайранхисем вăл сăмаха калаймĕç. Паянхисен каламалла. Асилуçен кĕнекине пухма тытăнмалла. Ульхапа Елена Ухсайсен, В.И.Давыдов-Анатри, Мария Булатова, Петр Чичканов, А.Савельев-Сас, Порфирий Афанасьев тата ытгисен сăмахĕсем пур. Кĕçех Петĕр Моисеев, Аристарх Дмитриев, Юрий Сементер çырнисем пичетленĕç. Ку çителĕксĕр. Кайран каю шăтать.

ЧĂВАШ СĂМАХĔН ЫВĂНМИ ĂСТИ

Якку Ухсай пултарулăхĕ çинчен хулăн кĕнекесем, монографисем, диссертацисем, пысăк статьясемпе очерксем çырнă. Чăваш университечĕсенче ун çинчен 5—6 лекци вулаççĕ, çавăн чухлех хăнăху-тишкерӳ сехечĕсем ирттереççĕ. Анчах ку таранччен те унăн еткерĕн анлăшĕпе тарăнăшне çавăрса илеймен-ха. Малтанхи тĕпчевсем — проблемăпа идея, темăпа меслет, жанрпа сăнар, чĕлхе тата ытти çинчен çырнисем, паллах, кирлĕ. Анчах вĕсенче хăй вăхăчĕн синкерĕ пур: пĕлнĕ çинчех каламасăр хăварни, картса лартнă «хушнă» виçерен тухайманни вĕсене киветсе тăрать.

Поэт архивĕнче 1924 çулта çырнă сăвăсем, каярахпа пичетрен пăрса хăварнă ярăмсем, вăрçă хирĕнче «хуçса пăрахнă» хайлавсем (вăл шутра — драма) упранаççĕ. Юлашки вăхăтра çине тăрса якатнă «Чĕмпĕр» (вырăсла «Симбирская хроника») поэма татăкăн-кĕсĕкĕн кăна пичетленнĕ.

Поэтăн эпистолярийĕ (кун кĕнекисем, çырăвĕсем, асилĕвĕсем, интервьюсем, ĕç хучĕсем, тĕрлĕ ĕлкевсем) тĕпчев картине кĕмен. Поэтăн хаçатсемпе журналсенче тухнă ĕçĕсене ятарласа никам та пухман. Хăйне литературăна ял хыпарçинчен — ялкортан — кĕнĕ тесе калатчĕ. Эппин, çав никĕсе туллин тĕпчемеллех.

Я.Г.Ухсай — вичкĕн публицист. Я.Ухсай пултарулăхĕнче (пурнăçĕнчи пекех) 3 пысăк тапхăр. 30-мĕш çулсенче çырни — пултарулăхĕн пĕр шайĕ. Тăван Çĕршывăн аслă вăрçинчи çыру ĕçĕ-хĕлĕ — тепĕр шай. 60—80-мĕш çулсенчи «этемпе çутçанталăх шăпи» çинчен çырнисем — чăваш (тен, Раççейĕн те) публицистикипе поэзийĕн шедеврĕсем. Вĕсене тĕппийĕрĕпе шĕкĕлчемеллех, унсăрăн Ухсай Яккăвĕн тĕнчекурăмне, хастарлăхне, философине тата элтешлĕх туйăмне (гражданла позицине) тĕрĕс тупма пулмасть. Поэзири туйăм-шухăш ытарлă, вăл çыравçăн сăн-сăпатне кулленхи пурнăçри пек кăтартмасть. Ытти пултарулăха та шута илмелле.

Ӗамка ӗинчен тар йӑхнӑ чух
Шӑнӑрсенче хӑват вӗрет,
Ялӑма = тӑма ти вӑхӑт ӗук,
Ӑсна - хыватпӑр аслӑ ӗул,
Ӑҫтан хӑратӑн сивӗрен?

Ӗурхи хӗвел пекех ӗнтӗр
Хӗртетпӗр
Хамӑр кунсене
Ӑтӑ, хӗлле!
Хашка та ирт,
Чӗлӗ ӗӳре, хӳр кӗртсене!
Сан пек чӗлӗ пуҫса ӗнтӗр
Вататпӑр кивӗ тӗнчене,
Ӗнтӗр - илемлӗ ҫуркунне.

1925.

Малтанхи сӑввисенчен пӗри — Пишпӳлекре вӗреннӗ чухне 1925 ҫулта ҫырнӑ «Эпир — илемлӗ ҫуркунне» сӑвӑ вӗҫӗ.

Якку Ухсай — тĕпчевçĕ. Шырав чĕмми пурри ăна Ĕпхӳри тĕпчев институтне илсе çитернĕ. Унта кĕске вăхăт ĕçлесех пысăк ĕç туса хăварнă. Чи сумли — К.В.Иванов еткерне пухни; ун çинчен нумай-нумай статья тата «К.В.Иванов» кĕнеке çырни. Ку кĕнеке 1940 тата 1957 çулсенче (тĕпрен çĕнелсе) пичетленнĕ.

Я.Г.Ухсай хăй «эпĕ пĕр калав та çырман» тесе каланă пулсан та, яш чухне унăн питех те чипер новеллăсем, тĕрленчĕксем пичетленнĕ. Эпикăлла шухăшлавĕ, эппин, çамрăк чухнех палăрнă.

Ухсайăн лирики, лиро-эпики. Чăваш поэзийĕнче Ухсай Яккăвĕ — чи тухăçлă, нумай енлĕ сăвăç, унăн пуян еткерне ушкăнласа пăхма тивет.

Пĕрремĕш ушкăн — **лирика хайлавĕсем**: сăвăсем, сăвă ярăмĕсем; малтанхисем, вăрçă çулĕсенчисем, 60—80-мĕш çулсенче çырнисем.

Иккĕмĕш ушкăн — **лиро-эпика пурлăхĕ**: малтанхи поэмăсем, «Хурçă та çуннă чух» ярăм, «Ача чухнехи çăлтăрăм» трилоги, «Шурă хурăнпа калаçни» поэма.

Виççĕмĕш ушкăн — **эпикăлла поэзи**, хресчен шăпин пенталогийĕ: «Халăхăн ылтăн кĕнеки», «Çĕр», «Кĕлпук мучи», «Ту урлă çул», «Акăшкӳл» хайлавсем.

Таваттăмĕш ушкăн — **истори йĕрĕ**: «Ĕмĕт», «Аслă çурт умĕнче», «Чĕмпĕр» хайлавсем.

Пиллĕкмĕшĕ — **шăпа философийĕ**: «Тутимĕр», «Шуйттан чури» сăвăллă трагедисем.

Я.Г.Ухсай çырнисен пуххи миçе кĕнекеллĕ пулассине халлĕхе калама çук. 5—6-ран кая пулмастех. Пичетленнисем мĕн чухлĕ, пичетленменнисем тата! Çав еткере йăлт ăнкарса илмесен тĕпчевсенче кăлтăксем пулаççех. Çавăнпа академилле кăларăм хатĕрлекенсем умĕнче халлĕхе Я.Г.Ухсай еткерĕн пĕтĕм пурлăхне пĕр çĕре пухса шута илес, кашни хут татăкĕн вырăнне палăртас, пĕтĕмĕшле хак парас ыйту тăрать.

Паллах, халиччен поэт мĕн çырнă, çавна кашни вулакан хăй пĕлнĕ пек юратса е тиркесе, е ним хакламасăр хăй шухăшне хыттăн е хуллен калама пултарать. Кашни çын кăна мар, кашни çĕнĕ ăру, кашни урăх самана иртнине хăйле хаклать. Ĕмĕрсен анлăшĕнче, татах теçетке çулсем иртсен, чăваш халăхĕпе поэзийĕ çинчен калаçнă чухне Я.Г.Ухсай ячĕ маларах тухса пырĕ. XX ĕмĕрти чăваш кун-çулне вăл курăмлă сăнарлама пултарнă. Çавăнпа сăвăç çырнисем —

яланлăха. Ухсай Яккăвĕ кирек хăш вăхăтри çынна та юрăхлă. Яшши-ватти валли унта хитрелĕх çеç мар, шухăш та нумай.

Сăмахĕ витĕмлĕ, чĕлхе янăравĕ çыпăçуллă, ӳкерчĕкĕсем чĕрĕ, сăнарĕсем ĕнентерӳллĕ. Я.Ухсай — илемлĕх ăсти, илем урлă шухăшлакан философ. Вăл, хăй каланă тăрăх «пуçра харăсах 500 йĕрке сăвă упраса тăма, çав хушăрах пĕр цифра та астумасан та» пултарнă. Халăх шăпи, илемлĕ сăмахлăх пирки вăл кулленех шухăшланă. Хытарса хăй шухăшне каланă чухне ытти çыравçăсенчен пĕр-иккĕшĕ кăна (Хв.Уяр, Н.Илпек, А.Емельянов) çивĕч статья çырнă. Ку енĕпе Я.Г.Ухсай чылай хушă литература тĕнчинче С.Элкер, П.Хусанкай çирĕплĕхне тытса пычĕ.

Чун-хавалĕ салтакла çирĕп пулнăранах унăн нумай элск, тĕрĕс мар тиркев илтмелле пулчĕ. Ман куç умĕнчех Я.Г.Ухсай Карачри инкек хыççăн — мăшăрĕ Мария Дмитриевна çĕнĕ пӳрт витме хатĕрленĕ хĕçтимĕр листисемпе касăлса вилсессĕн — хăйĕн 1937 çулĕ çинчен калаçма пуçларĕ (унччен Мĕтри Юман тавра кăна пуплеттĕмĕр). Ӳнерçĕ çав саманана поэзи мелĕпе вирлĕн çавăрса кăларасси пирки асăнатчĕ. Историри синкерлĕ кун-çула сăнарлама унччен пултарнăскер, «Шурă хурăнпа каласни» поэма хыççăн тспĕр поэмăра çавăн пек уççăн каласма тытăннах пулĕ тетĕп. Тен, архивĕнче пуçласа хунисем пур та пулĕ.

Пурнăçăн тĕрĕсмарлăхĕ нумай. Вăл ĕлĕк те пулнă, халĕ те пур. Ухсай саманинчи ӳнерçĕшĕн чи пысăк тĕрĕсмарлăх — чăн пурнăçа хăв курнă, шухăшланă пек сăнарласа пама юраманни. Мĕншĕн Ухсай (ыттисем те çавах) ĕлĕкхине сăвăланă чухне хăватлă, анчах хамăр саманари «Акăшкӳлсем» патне çитсен унăн хайлавĕ тăсăлса каять? Çаврăнать-çаврăнать автор, конфликта (хирĕçтăрăва) аталантарса яраймасть. Мĕншĕн тесен тĕрĕс çырсан пичетленмест, вара маларах панă ултă «выговора» каçармаççĕ кăна мар — яланлăхах сассăр та хăвараççĕ.

Апла та, капла та кирлĕ пек йĕрке çуккине поэт хытах калатчĕ. Уççăнлăх тапхăрĕ килсен мар. Унччен. Ку вăл — паттăрлăх. Чăваш çыравçисем хушшинче ку халлĕн ун пек паттăр курăнмасть-ха. Халăхра тĕрĕслĕх компасĕ — Ухсай пекки — малашне те кирлех.

Халăх поэчĕн юлашки тапхăрта çырса пынă кунчăкĕнче (дневникĕнче) тиркевлĕ, тарăхуллă йĕркесем пайтах.

Пĕрисем вĕсене Ухсай пурнăçран, çынсенчен сивĕнсе хаярланса, хирĕçӳленсе пынипе çырнă теççĕ, теприсем ватлăхра пуçлăхсенчен те хăрами пулнăран теççĕ. Вăл та, лешĕ те тĕрĕсех пулма пултарать. Ăна никам та йăлт шайлаштарса татса калаймĕ. Я.Г.Ухсай ХХ ĕмĕрĕн малти шухăшлавçисемпе тан пынине вăхăт кăтартса пачĕ. Тĕнчепе çĕршыв мĕнле авăрта çаврăнса тăнине вăл Мускаври хастар çыравçăсемпе тан курса тăнă. Этем ăçта мĕнле сĕтел хушшинче çырса ларнинчен килмест талант та, ăс та, сăнарлăх та. Якку Ухсай Карачри мунчара çырсах Александр Фадеев, Александр Твардовский, Николай Старшинов, Егор Исаев, Самед Вургун, Мустай Карим ырламалла çырма пултарнă. Чăваш «чĕппине» тĕнче е вырăс классикĕсем палланăран кăна мухтас çук.

Якку Ухсай — çутçанталăк çуратнă ӳнерçĕ. Илем, юрату, курайманлăх, тĕрĕслĕх салтакĕ. Чăвашлăха сăмах хăвачĕпе хӳтĕлекен сăвăç. Вăл чăваш литературин шултра телейĕ.

УХСАЙ ЯККĂВĔН СĂВĂ ТĔНЧИ

Сăмахлăх çуртне купаламалли япала — сăмах. Сăмахпа вара култарса савăнтарма, лартса маککăртма, ура çине çĕклесе çапăçăва кĕртме, чуна сар çу пек ирĕлтерме пулать. Пĕр майлă вырнаçтарсан шăнкăр шыв пек юхать, тепĕр майлă лартсан урнă йыт пек туллашать, такăнма тытăнсан чуман лаша пек хартлатать, екки кайсан сар кайăк пек шăранать. Якку Ухсай аллинче чăваш сăмахĕ халăх тĕнчекурăмне, шухăшне-туйăмне ытти нумай-нумай ăстаран иртгерсе тĕрĕс уçса тăрать. Ăçтан тухать çав тарăнлăх, тасалăх, чунри килĕшулĕх? Тĕрлĕ-тĕрлĕ илем пайĕсем, ытарлăхсем, сăнарлăхсем шухăшпа пĕтĕçсе тăнинчен. Уйрăммăн илсен нихăш илемлĕх мелĕ те поэзи хакне хăпартса тăраймасть, пĕрле чухне — тата сисмелле мар килĕштерсе çыхăнса тăнă чухне — пĕтĕм хайлава илемлентерсе, ăслăлантарса ярать. Çав хăтлă çыхăнулăх ăста сассине палăртса уйрăмлатать. Ухсай Яккăвĕн сасси вара чăваш поэзийĕнче, Раççей литературинче пайăрланса тăрать. Ăна чăвашла шухăшлавĕпе тĕнчекурăмĕшĕн ырланă та паллă тĕпчевçĕсемпе критиксем, çавăншăнах юратнă вырăс литературин корифейĕсем, тем тĕрлĕ паллă çыравçăсем, тĕпчевçĕсем. Вĕсене Ухсайăн поэзи тĕнчийĕ хăйие расна пулни килĕшнĕ.

Поэзи тĕнчинче пуриншĕн те пĕр саккунсемех: танлаштару вăл кирек камшăн та танлаштару, эпитет та пуриншĕн те пĕр. Вĕсемпе мĕнле усă курасси вара ниепле те пĕр манирлĕ пулаймасть. Камăн пит лайăх çĕвĕленсе пырать, теприн татăла-татăла тĕввине хăварать.

Унер çуртне ĕмĕр тăршшĕпе ик йĕркеллĕ такмакран пуçласа сăвăлла роман таран купаласа, Якку Ухсай сăмах хутаçĕнчи пĕтĕм мелсене, ĕç ăслайĕсене, илемлĕх хатĕрхĕтĕрне усса кĕртнĕ.

Сăвăхывăм, сăвă виçи тата çавралăх йĕркисене сăнасан, вăл пур йышши майсене те ал-хапăлах пулни курăнать. Ытларах пусăмлăх-сыпăклăх (силлабо-тоника) хывăмĕпе ĕçленĕ; унăн пусăмлăх хывăмĕ те (тоника), сыпăклăх хывăмĕ те (силлабика) пур. «Арçурипе» «Нарспи» сыпăклăхĕ

(силлабики) Ухсая пĕртте ют мар. Халăх юррисен пусăмлăхĕ (тоники) çăмăллăнах алла килнĕ. Ватлăх çулĕсенче халăх сăвăçи в е р л и б р тытăмне кӳлме пуçларĕ. Верлибрăн çичĕ тĕс, вăл прозăлла сăвва çывăх, халăх юрри пек кĕвĕленсе пырать. Ухсай çавна вичкĕн шухăшсем калама селĕм тесе шутланă.

Поэтăн хитре верлибрĕсем — «Лăпкă Дон çинчен каласа паракан салтак такмакĕ» (1942—1982), «Ваттин те çамрăккин уявĕ» (республика Халăхсен Туслăхĕн орденне илнĕ кун, 1974), «Атте-анне» поэма. Вĕсенче верлибрăн пĕтĕм тĕсĕ курăнса тăрать.

Я.Г.Ухсай поэзийĕн çавралăхĕ (строфики). Йĕркесен çыхăнса тăракан ушкăнĕсем — çаврасем ик йĕркерен пуçласа теçеткесем таранах пысăкланса пыраççĕ. Вĕсене кашнине ят парса тухнă. Вĕсемпе поэт пуринпе те туллин усă курать.

Икйĕркелĕх (дистих, двустишие) Ухсай кĕнекисенче темĕн чухлех.

Ирхине тухатăп эп хире.
Сирĕлсе пырать хуллен тĕтре.
(1933, «Хирте»).

Астăватăп, тусăмçăм, пĕрре
Çакă çĕмĕрт курнăччĕ пире.
(1940).

Кăмăл лăпкă чух мана эс ан мухта,
Унсăр та хаваслăх пысăк ман чунта.
(1955).

Виçйĕркелĕхрен пулнă сăвă тĕсĕсем те çителĕклĕ. Виçйĕркелĕхпе йĕркеленĕ триолет тĕсĕ те пур («Халăх юрринчен», 1947).

Пĕр юмах, ачашăм,
Итлесем, тархасшăн,
Хăлхуна эс чик!
«Хальхи сăпка юрри» (1955).

Тăватйĕркелĕх — катрен, такмак — чи анлă сарăлнă çавра. Кунта унăн сыпăнуллă çаврине илĕпĕр:

Курак сасси те, шăнкăрч шăхăрни те халĕ
Чӳречерен кĕрсе кĕрленĕ сехетре

Пероçăм ман юпах тиха пекех хускалĕ
Чупса сĕтел çинче хĕвеллĕ пӳлĕмре.
(«Çыру сĕтелĕ хушшинче шухăша кайни», 1957).

«Ĕпхӳ пасарĕ» (1937—1939) — пилĕкйĕркелĕхсен пĕчĕк поэми, çăмăл вуланать. Шахвăртуллă çаврине асăрхăпăр:

Ĕпхӳ пасарĕн шавĕ витĕр лайăх
Пăхса утатăп халăх хушшинчен,
Илтетĕп: читлĕхре юрлать саркайăк,
Сутмалăх самăр автансем нумайăн
Авăткалаççĕ кăнтăр тĕлĕнче.

Ултта, çиччĕ — пурте пур Ухсайăн. Ултăйĕркелĕхпе «Гранит» сăвă (1940) — К.В.Иванова халаллана йĕркесене çырнă.

Ухсай Яккăвĕн «Çурхи ӳкерчĕк» сăвви (1935) ултă йĕркеллĕ çаврасенчен тăрать: «Çĕмĕрт шурă шĕлкеме çакать, Сарана тунийĕ çеçкеленчĕ, Папкана ларать яштак çăка, Хысмаланчĕ хурăн шыв шерпечĕ. Чи малтан шиплетнĕ шăпчăка Улăха паян кайса итлесчĕ».

Икĕ виçшер йĕркерен тăракан ултйĕркелĕх çаври:

Çӳл ту çинче, шур чул çинче
Чие пек хĕрлĕ кĕпепе
Ларатăп эп пĕчченçĕ.
Выля-выля пуç тăрринчен
Кĕрхи тăрна картийĕ пек
Шур пĕлĕтсем иртеççĕ. (1938).

Çак икĕ ултйĕркелĕх пĕр марри тӳрех курăнать. Эппин, Ухсай сăвă ăсталăхĕн тĕрлĕ мелĕсене пайтах шĕкĕлченĕ. Тĕрлĕ тытăмлă çаврасем ăнсăртран пулман. Çичĕ йĕркеллĕ çавра тĕслĕхĕ — «Пĕр полк çинчен хунă сăмах» поэма (1943).

Сакăрйĕркелĕх — октава çаври — жанр ятне те тухнă. «Кĕрхи октавăсем» (1935), 11 октава ярăмĕ, вĕренӳ кĕнекисене кĕртнĕскер, паха тĕслĕх.

Сакăрйĕркелĕхĕн Ухсайла тĕслĕхĕ те пур:

Вăштăр-вăштăр çил вĕрет,
Хум килет те хум силлет

Ешĕл çарана.
Çакă уçă вăхăтра
Пирĕн аслă улăхра
Ерипен кăна
Авăтать куккук,
Чăп-чăпар куккук. (1947).

Вăл — чăвашла сицилиана (мăшăрлă састашсене тăваттăмĕш мăшăрланакан йĕркесемпе сыпăнтаракан октава).

14 йĕркеллĕ Онегин çаври, Шекспирпа Ронсар (акăлчанпа итал) сонечĕсем нумай мар. Вĕсен уйрăм çаврисем малтанхи тапхăрсенче çырнă хайлавсенче ытларах.

«Тутимĕр» трагеди умсăмахĕ («Аттене аса илсе») 15 йĕркеллĕ çаврасенчен тăрать. Ытларахăшĕ — сыпăнуллă çаврасем:

Тиек те, пуп та чăваша
Йĕрленĕ çăтă ĕмĕтпе
Вĕсем çемçе тăпра ашса
Апшур салтак эшкерĕпе
Хăпса килсен, тытса хĕсме
Ун сехрине хăпартмалли
Малтан чиркӳ, кайран тĕрме
Лартсан, шыва та укçалла
Ăсма хушсан, ĕçчен чăваш
Пулман тек мăльăк пек йăваш, —
Хăй тарĕнче, куççулĕнче
Çемçелнĕ ырă çĕр çинче,
Пелепейре, пăлхав çĕкленĕ,
Терт курнă, тӳснĕ чĕринче
Ун пулнă çапăçма терменĕ.

Чăваш чĕлхин сыпăнса сăмах тăвас мелĕсене Ухсай Яккăвĕ сыпăнуллă пуплев тăвас еннелле сулăнтарнă. Шухăша вĕрен пек явса пырса, пĕр çаврара пĕр кăткăс ӳкерчĕк-сăнар тăвать вăл. Чăнласах, Ухсайла çыру мелĕ. Хресченле шухăшлав: кашни пулăма, ĕçе пĕрне тепринпе сăлтавласа, евитлесе пыни пур. Çакă салтакла хушу чĕлхинчен пачах уйрăлса тăрать.

Сăвă ăстисем 20 йĕркеллĕ çаврапа асапланма юратаççĕ. К.В.Ивановăн 20 йĕркеллĕ çаври 5 катренлă. Вĕсене пĕр шухăш, пĕр ӳкерчĕк çыхса тăрать. Ку енĕпе Ухсай чăваш

поэчĕсене хыçала тăратса хăварнă. Унăн çирĕм йĕркеллĕ çаври Лев Толстой пуплевĕ пекех — хăйпăтса илмелле мар пырать. Тĕслĕх:

Хамăр халăх кăмăллăн
Кăчăрт-кăчăрт çурлапа
Вырнă хыççăн хăмăллă
Сарă пусă хушшинчи
Яп-яка çемçе çулпа
Халĕ эп, чăваш ачи,
Лăстăр-лăстăр хутаçпа
Ку тăван тавралăхра
Кĕлмĕçĕ пек инкеке
Кĕтмен ирхи шухăшпа
Çирĕм пилĕк çухрăмра
Ларакан Пишпӳлеке
Тĕк пек çăмăллăн, маттур
Утнă чух, ман хутаçра
Кăвапаллă çăкăр пур.
Çăкăрпа пĕрле тата
Кăçалхи мăкла такан
Ашĕ тăкăс пулнăран
Силленсе пырать унта
Калăп пек тăп-тăп шăрттан!

Çакă вăл 20 йĕркеллĕ çавра. Ухсай çаври. Ăна К.В.Иванов поэминчи катренсем çине уйăрма май килмест. Юри сыпăкласа кайнă тесе те калаймăн. Пĕр сăмахĕ теприннe сыпăнса, калама пуçланине тăсса пырать. Инçетри яла хирпе каякан чăваш ачин хутаçĕнче çăкăрпа шăрттан сиккелесе пыраççĕ тенĕ сăвăç. Ăна вăл пĕчĕк ăнлантарусемпе ӳкерчĕклесе хунă. Паллах, пĕтĕм сăвă-юрă çакăн пек çаврасенчен тăма пултараймасть. Кирлĕ те мар. Япала пайĕсем виçеллĕ чухне хаклă. Ухсай çав виçене тупма пĕлет. Унăн поэзи тăварĕ, тутлă яшкари пекех, вăхăтлă калать.

Ытарлăх мелĕсем. Я.Г.Ухсай сăвви-поэмисенче, сăвăллă романĕсенче, трагедийĕсенче, çавăн пекех публицистика хайлавĕсенче ăнăçлă илемлĕх тĕслĕхĕсене вĕç-хĕррисĕр тупма пулать. Ухсай чĕлхи — ытарлăхпа пиеленнĕ чĕлхе. Унта эпитетсăр пуплев çук та пулĕ.

Евĕрлев сăмахĕсенчен пулнă эпитет: *лĕнкĕр-ленкĕр* сăпка, *нăтăрт* ӳт-пӳ, *кăн-кăн* айван, *шарт-шарт* ăшă.

Япала ячĕ, япалана ăнлантарса эпитетланни: «Кайран патша *юн çумăр* та çутарнă, *Вут çумăр* та кăларнă ялсенче».

Пĕр евĕрлĕ пуçлану (*анафора*) — пуплев эрешĕ, йĕркесене пĕр сăмахран, сăмах майлашăвĕнчен, сасăсенчен пуçлани:

Саккун тесе хăпса килетчĕç...
Саккун тесен сехре хăпатчĕ...
(«Халăхăн ылтăн кĕнеки»).

Хайсемшĕн пултăр пур çĕрте те ăнăç,
Хăйсемшĕн çунтăр килсенче вучах,
Хайсем чыхасшăн туччăр самăр пурнăç,
Хайсемшĕн ӳстĕр çимĕçлĕ пахча.

Пысăклатупа пĕчĕклетӳ (*гиперболăпа литота*) нумай.

Пысăклатса кăтартни: Çыравçăсем ĕрчеççĕ *кĕтӳпе*!

Пĕчĕклетсе кăтартни:

Пĕчĕкки вилме чарасшăн
Çухăрать пуç вĕçĕнче.
Хăй *чылай кĕске аслашшĕн*
Кăн-кăвак *сухалĕнчен*.
(«Кĕлпук мучи»).

Аслашшĕне вилме парас мар тесе пăшăрханакан ачана лешĕн сухалĕнчен **чылай** пĕчĕк туса кăтартни пуплеве хаваслă, ыр пиллĕ шӳт сĕмĕ кĕртет.

Чĕрĕлетӳ (*олицетворени*) — сăвă-юрăра вĕçĕмсĕр тĕл пулакан ытарлăх, чĕрĕ мар япалана чĕрĕ туса кăтартни.

Ансат чĕрĕлетӳ тĕслĕхĕ: «Хисеплĕ *тусăм* — шанчăклă *пăшалăм*». Халăх сăмахлăхĕнче пăшала чи çывăх туспа, савнипе, арăмпа танлаштарни пур. Ухсай халăх шухăшлавĕ майлах усă курса сăмаха витĕмлĕ тăвать.

«Таçта тухса чăваш *телейĕ тарнă*, юртса *çӳренĕ* тилĕ йĕрĕпе» (тилĕлле юртса, тарса *çӳрекен* телей).

Ухсайăн телейĕ те, алăри калемĕ те, чĕри те, пĕлĕчĕ те, шухăшĕ те тата тем те чупса-юртса çӳрет. Халăхри пекех. Анчах — Ухсайла. Кĕтмен çĕртен.

Анлă чĕрĕлетӳ тĕслĕхĕ: «Кĕрхи *тĕнче* автан яшки çисе *тăраннă*, хаваслă какăрать тăраннă пырĕ ун».

Пĕр ӳкерчĕкпе, пысăклатса та пĕтĕмлетсе, поэт тулăх апат-çимĕçлĕ ял кăмăлне, тыткаларăшне уçса парать: выльăх-чĕрлĕх пусаççĕ, ĕçкĕсем пуçланнă, хĕрĕнкĕ чăваш хавассăн юрлашкалать иккен!

Ухсай япалана иккĕмĕшле, хушăмлă-ытарлă пĕлтерĕшĕпе палăртма та (метонимилеме) юратать. Вĕсем унăн — кашни çаврара пекех.

Вырăн метонимийĕсем:

«Мана кунта *ăсатнă ял совечĕ*: ал пуснă, хунă кăнкăвак пичет. Ман *ял* тăван ачи чăваш студенчĕ тата поэчĕ пуласса *кĕтет*». «*Мускав* канма ура çине *çĕкленчĕ*» («Муса Джалиле» поэмăран).

«*Макăртăр* усал *Германи*». «*Париж курать, Мадрид кĕтет*, кĕтсе *хускалĕ* хăйне хурсем хăтарасса шанман ват *Рим*» («Шурăмпуç», 1957).

Вăхăт метонимийĕ: «Ку пулчĕ *йывăр çул*».

«Хамăр çĕнтерӳ ялавĕ хуп-хура рейхстаг çинче хĕп-хĕрелнĕ кунсенче». Хăçан? 1945 çулхи çу уйăхĕн кунĕсенче!

«*Йывăр çул*», «*телейлĕ сехет*», «*хăрăк этем*»... Тӳрĕ пĕлтерĕшĕнчен тухса, çак сăмах майлашăвĕсем ытарлă сăнара кăтартаççĕ. Час-часах усă курнипе кулленхи пуплевре ытарлăхĕ тӳрĕ пĕлтерĕшĕпе пĕрлешсе пырать, çавăнпа «ял çыннисем кĕтеççĕ», «атте-анне патне каятăп» теес вырăнне «ял кĕтет», «яла кайрăм» тетпĕр.

Халăх юррисенчи хытса ларнă ытарлăхсем ялан усă курнипе сăнарлă пулма пăрахаççĕ. Ун пек чухне сăвăç кĕтмен эпитетсем, метафорăсем, танлаштарусем тупать: «*хур чĕппи* пек сарă *уйăх*» (пĕчĕклетнĕ танлаштару), «*чăпта патши* Ехрем хуçа» (пысăклатнă танлаштару), «*антăхать* уяр *çанталăк*», «нимĕç виллисем çинче ларакан *çăхан пасарĕ*».

Ытарлăх шутне кулăш-тăрăхлав (ирони) кĕрет. Кĕске е анлă кулăш Я.Ухсай сăвви-поэмисенче яланах пур. «Шăпчăк» поэма — вăрçă хаярлăхĕ, тискерĕ çинчен, чăваш юррине юратакан Александр Туринке танкист çинчен. Çавăнтах, виçеллĕ пыракан катренсен хушшинче — кулăшла çаврăм — 14 йĕрке:

Вăрçăра танкист кам мар-ши?
Вăл ĕçре хăйне хăй маршал:

Вăрманне те касакан,
Хăмине те чутлакан,
Кăмака та тавакан,
Кантăкне те лартакан,
Мунчине те хутакан,
Милĕкне те касакан.

Эрехне те ĕçекен
Тесшĕн эпĕ. Çук иккен.
Манăн сăвă йĕркинче
Юрамасть ун пек сăмах:
Оборона лининче
Ĕçмелле тăр шыв анчах!

Танлаштарусем. Танлаштару — поэзи чĕлхин чи анлă сарăлнă илемлĕх мелĕ. Мĕнле кăна танлаштарма пулать — Ухсай пуринпе те усă курать. Унăн сăввисенче *ансат*, *анлă*, *хутлам* тата ытти танлаштарусем пур. Хăш-пĕр тĕслĕхсем илĕпĕр («Çĕр», «Ту урлă çул», «Кĕлпук мучи» т.ыт.те).

Ансат танлаштару: *тиха пек* ирĕкри чăваш, *йĕп куçĕ чухлĕ* ăнăçу, *пăшатан пек* куçлă;

Кĕр кунĕ — самана,
Чечекĕ — эп, пыл хурчĕ — эс.
(«Тутимĕр»).

Аванчăк пайрăмлă танлаштару: «Хăлат пек куçлă йĕкĕтсем». Асăрхăр. Хăлат пек йĕкĕт мар, хăлат куçлă йĕкĕт! Пĕр пайне мала кăларнă та ун урлă пĕтĕм япалине хаклана.

Хутлам, кăткăс танлаштару:

Ури сӳс пек чухне те кăтартасшăн
Чĕлхи-çăварĕ паттăр иккенне... (Халăх пуплевĕнчи танлаштару).

Ĕне пекех ĕнерсĕр эсĕ. «Эсĕ ĕне пек» тата «ĕне пек ĕнерсĕр» тенисенче уйрăмлăх самай пысăк.

Ярхун тесе ят панă паттăр ывăл
Утленчĕ *йĕтĕрпе унанă пек* (çирĕп, нăкă çитĕнчĕ теес вырăнне).

Шыври сап-сарă *хур чĕппи пек уççăн*
Хăма çинче шуса çӳрет *сава*...

Хур чĕппи пек шуса çӳрекен сава; хăй: 1) сарă, 2) шыв çинчи пек тикĕссĕн пырать, 3) нимле те мар — уççăн çӳрет.

Тӳрӗ те анлӑ танлаштару тӗслӗхӗ:

Ӗçке ерсе çӗрме пуян сӳтуçа
Укçа сапаласа çӳренӗ пек,
Кӗрхи тӗнче сап-сарӑ ылтӑн çулçӑ
Тӑккаласа тӑратчӗ кунӗпе.

Çулçӑ сапакан кӗр кунӗ укçине сапалакан тирпейсӗр ӗçкӗç пек иккен!

Хирӗçлетнӗ танлаштару: «Мессершмитд» сасартӑк пӗлӗт айӗнчен тискеррӗн тухса сире тӗллерӗ те кӗрлерӗ. Хур кайӑксем, сире шеллерӗм пит» (1943). Хур кайӑксемпе тӑшман самолечӗсене хирӗçле пӗлтерӗшпе танлаштарнӑ.

Анлӑлатнӑ сӑпата тӳррӗн танлаштарни:

Чунтан юратнӑ та таса вӗретнӗ
Апат пек вырӑс чӗлхине...

Мӗнле чӗлхе? Апат пек кирлӗ чӗлхе. Мӗнле апат? Таса вӗретнӗ, чунтан юратнӑ апат. Анлӑ ӑнлантарнӑ япалапа танлаштарни.

Ун пек тӗслӗхсем Ухсай поэзийӗнче темӗн чухлех.

«Йӑвасӑр юлнӑ пӗлӗтри текерлӗк йӗрсе куланнӑ пек, ЧӔРЕ СИКЕТ». Чӗре мӗнле сикет? Мӗнле текерлӗк пек? Текерлӗк мӗн тунӑ пек? Виçӗ хут кӑткӑслатнӑ танлаштару.

«Пӑта та хырӑмра çӗртес пек сывӑ ача-пӑча». Мӗн пек сывӑ? Хырӑмра пӑта çӗртес пек!

«Çап-çамрӑк конюх витерен ирех вӑй-халлӑн утса пырса лашасене çерем çине кӑларнӑ пек, ертет пераллӑ аллӑм шур хут çине чӗре сӑввин йӗркисене» («Çыру сӗтелӗ хушшинче шухӑша кайни»). Алӑ йӗркесене хут çине мӗнле кӑларать? Конюх лашасене çерем çине кӑларнӑ пек.

Ухсай кӑнттаммӑн шухӑшлама пӗлмест. Унӑн шухӑшӗ ӳкерчӗкрен ӳкерчӗке чупать, пӗчӗк танлаштарӑва пысӑкки патне хӑвалать. Ку унӑн хӑйне расна шухӑшлавӗ. Тӳресен пуклак пуплевӗнчен тӳрех уйрӑлса тӑрать. Сӳтӗлсе пакӑлтатакан çын шухӑш йӗрне çухатса паврать. Ухсайӑн тем чуль вӑрӑм пуплевӗнче те шухӑш тӗшши çирӗп. Тепӗр чухне тӗременсем е вӗрентекенсем çав шухӑш йӗрне ӑнкараймасӑр, сӑвӑсенче хӑйсем пӗлнӗ пек чарӑну паллисем лартса сӑнарлӑ

ӳкерӗве аркатаççӗ. Уйрӑмах Ухсай верлибрӗсемпе асапланаççӗ поэзие тата логикӑна ӑнкарман тӗпчевçӗсем. Чӑваш мифологипе сӑмахлӑхне пӗлмен куравçӑ Праски Витти ӳнерçӗн пуçлӑкуçлӑ, мӑйракаллӑ-сухалла ӳкерчӗкӗсене ӑнланман пекех, халӑхла шахвартуллӑ е валтуллӑ пуплеве чухламан çын Якку Ухсайӑн сыпӑнуллӑ сӑввисене тӳрех картса илеймест.

Куçӑм (анжанбеман) — сӑвӑ пуплевӗн пӗр пайне юриех тепӗр йӗркене куçарса пыни. Тӗрлӗрен пулать: 1) пуплевӗн (шухӑшӑн) юлашки сӑмахне тепӗр йӗркене куçарни; 2) пуплевӗн пуçламӑш сӑмахне малтанхи йӗркере хаварса, шухаша тепӗр йӗркене вырнаçтарни; 3) пӗтӗм йӗркесенчи пуплеве пайласа тухни (трагедисенче ытларах тӗл пулать); 4) сыпӑк куçӑмӗ — пӗр сӑмахӗн пуçламӑш сыпӑкне пӗр йӗркере хӑварса, вӗçне тепӗр йӗркене куçарни (кун пек тӗслӗхсем Ухсайӑн çук, хальхи çамрӑксен, сӑмахран М.Карягинан, тем чухлех).

Атте ман халӑх хушшинче
Малта тӑратчӗ, *пурта пурччӗ* .
Ун аллинче. Ачаранах
Пӗлеттӗм эпӗ ку пуртта. («Тутимӗр»).

Сӳсмен эп тытрӑм. Пур хисепӗм
Тесе каланӑ кӑмӑлпа
Пуçне вӑл чикрӗ. *Кӳлтӗм эпӗ*
Çатан хӳмесӗр урапа. («Силпи çӑлкуçӗ»).

Тӗнче вӑрçи иртсен,те, *пирӗн*
Чӗре суранӗ лӑпланмасть.
Тӗнче вӑрçи иртсе каюçӑн
Нумай чунлантам, çаванпа
Пур тусшӑн та курать ман куçӑм,
Чӗрем тапать нумай юнпа.
(«Шурӑ хурӑнпа каласни»).

Танылмаш (инверси) — пуплев эрешӗ, йӗркери сӑмахсен вырӑнӗсене ылмаштарни. Сӑвӑсенче ялан тӗл пулакан илемлӗх мелӗ.

Тӗрӗс каласан: «Эпир пӗр кашӑкран пыл сыпнӑ евӗр пӗрле çуреттӗмӗр». Я.Г.Ухсайӑн «Шурӑ хурӑнпа каласни» поэминче:

Пĕр кашăкран пыл сыпна евĕр
Çуреттĕмĕр *эпир пĕрле.*

Ылмаштарни нумай та мар, анчах вал пуплеве кĕвве кĕртет, сава виçин картне лартать.

Якку Ухсай саввисенче сайраран **таннайлах (исоколон)** тĕслĕхĕ тĕл пулать. Пуплеври икĕ е виçĕ çаврам пĕр тытăмлă пулни шухаша вăйлатма пулашать.

«Варман юрри» ярамран:

Таван Çершыв ĕçчен те сапар,
Тавать пурне те вăл яка.
Эс заграничнай ăпăр-тапăр
Илсе ярасшăн ан палка!

Ахах пек самахсем нумай-çке
Паян та хамăр чĕлхере.
Панкав пек хамăрла неснайски
Тесе, тăванăм, ан çуре!

Таван чĕлху сана çул уçнă,
Малтан тыттарна кĕнеке.
Тав ту та анкă-минкĕ пуçлăн
Ăна нихçан та ан тирке!

Танпайлăх эрешĕ хутлама çывăх, анчах тепĕр хут калани çук: урăх сăмахсем пĕр манерлĕ пулса янăраççĕ. Ку ярăмра танпайлăх тĕслĕхĕ: «Илсе ярасшăн ан палка!», «Неснайски тесе, таванăм, ан çуре!», «Ана нихçан та ан тирке!».

Я.Г.Ухсай трагеди асти пулни унăн лирикине витĕм кунĕ. Çакă поэзи синтаксисĕнче лайăх сисĕнет. Пĕр тĕслĕх — **пуплев (диалог)** мелĕпе усă курни:

— Ку тĕлĕк-и? — тесе итлерĕм.
Чăнах çĕр айĕнчен пулас:
— Мана, ачам, тăнла-ха, — терĕ
Сехре хăпартмăш ватă сас. («Вут чĕлхе», 1938).

— Ăçтисем пулатăн, — терĕм, —
Старшина юлташ?

— Чăвашран. Тăвай районĕ, —
Терĕ старшина. («Каччă», 1945).

Хăш-пĕр сăвăсем йăлтах пĕчченçи е йышлă пуплеврен (монологпа диалогран) тăраççĕ («Туй» поэма, «Халăх юрринчен», «Хальхи сăпка юрри»).

Чăваш литературинче сăмах ăстисем пайтах. Пĕри тепринчен маттур. Поэзире Ухсайăнни пек пуян чĕлхе тата камăн пур-ши? Ухсай чĕлхин сăмахсарне тăвас пулсан, унпа юнашар кам ларнă пулĕччĕ-ши? Петĕр Хусанкай? Тен, урăх çук та!

Кĕнекисене уçкаланă майăн кулленхи калаçура усă курман сăмахсене палăртса пытăм: вырăнти пушкăртлатутарла диалектран кĕнисем — *алама* этем, *кемсе* пырать, *ăшавлă*, *чăкме* хыврăм; туйăма палăртакан чĕнăсем — *мерттес*, *утăрья*, *ăрьях*, *имин*; *ийя*, *эччĕ*, *аву*, *аюк*; *ийе çури*, *юркан курăк*, *хура йĕлен*, *акăр ут*, *чуптар лаша*, *çуйкăн чĕре*, *алхапăлта*... Ял-хула ятне хăçан та пулин чăвашла каланă пулсан, Ухсай ăна вĕçергмест: Ĕрĕнпур, Пăрăслан, Тим, Ĕпхă...

Кĕскен каласан, тĕпчевçĕсемшĕн Я.Г.Ухсай поэзийĕн ытарлă чĕлхи — сухаламан ана, уçман çерем!

Ытарлă сăнарсем. Сăвăсемпе поэмăсен лирикăлла геройĕ хăй пулнине поэт пытараймасть, ăна чылай чухне сфрагидăсемпе (тахаллуспа) палăртса хăварать. Тĕнчене Ухсай хăй урлă сăнлать. Тĕнчен виçĕ сийне — çăлти, çĕр çинчи, аялти тĕнчесене — Ухсай йăла-йĕрке, халап-юмах, этем ĕненĕвĕ-тыткаларăшĕ урлă кăтартать.

Я.Г.Ухсай поэзийĕн тĕп геройĕ — чăваш тĕнчи, чăвашлăх, тăван çутçанталăк, тăван халăх, унăн кулленхи шăпи. Çакăнта Ухсайăн тăрех палăрса тăракан хăйевĕрлĕхĕ. Шухăшлавĕнче, пуплевĕнче, сăнарлăхĕнче тапса тăрать поэт расналăхĕ.

Якку Ухсайăн çыру çеммине (стильне) ыттисеннипе пăтраштарма çук. Кирек хăш çавринче те «ухсайлăх» пур: «Тырра ĕнтсе кăнтăр енчен вĕри çилсем вĕрни çинчен хыпарласа вĕçет шаланкă», «Кĕркке пулла авăрĕнчен вăлта вăлтса кăлариччен шăрттан яшки сĕткенлĕ пиçĕ», «Лаша вăрри пек çивчĕ шăлĕ витĕр шĕвик шăхрать тыркас унти уйра», «Автан сассисĕр ял тăлăх юлнă выçă пулнипе», «Эпир ырхан вăя пухатпăр ăт-тирте, çакатпăр вилĕме тытса чарасшăн мăя таса пилеш пĕтевĕ те»... Лăпкă та калуллă

пуплев, хутлам сăнарлă. Тĕнче те, пурнăç та — çĕр ĕçлесе пурăнакан этем куçĕпе, ăсĕпе, ĕмĕчĕпе. Ухсай сăввинчи шухăш тиевĕ хăйне манир. Вуланă чух çăмăллăн пырать, тимлесе пăхатăн — унта философи ăнлавĕ пытарăнса выртать. Йĕркесенче вăрттăнлăхсем пур, вĕсене час-часах иккĕлле ăнланма пулать. Ĕпхӳ пасарĕнче «саркайăк читлĕхре ларать; мăнтăр автан вăхăтран-вăхăта сас парасшăн каçарăлса çӳрет». Мĕншĕн кĕртнĕ-ши вĕсене поэт? Вăл мĕн курнине Шелепилле каласа каяс тенĕ-ши? Ахăртнех, апла мар. Чăнласа ăста поэтсен ирĕк çук, влаça пăхса çыракансен пурнăçĕ тулăх вара! Шахвăрту — Ухсай поэзийĕн пытарăнчăк вăйĕ.

Яланхи сăнарсем шутĕнче Я.Г.Ухсай Çутçанталăка, Çĕре, Шыва, Хĕвеле, Вута тата çĕр çинчи мĕн пур чĕрлĕхе курать. Вĕсене миçе хут асăннине компьютерпа шутласа кăларма тивет!

Сасă, çутă, тĕс, инçет пайăркисем выляççĕ унăн сăввисенче, кайăк-кĕшĕк, чĕрĕ чунсем, вăрман, улăх-çаран, уй-хир кĕрлет те çаврăнать. Этем вĕсемпе савăнса, йӳнеçтерсе, нушаран хăтăлса пурăнать. XXI ĕмĕр сăвăçисем ниепле те Ухсайла çыраймĕç. Вăл вăхăт та, вăл шухăш-ĕмĕтсем те иртнĕ. Наци пурнăçĕнче Ухсай курса ӳснĕ паллăсем юлманпа пĕрех. Вăхăт иртсен Я.Г.Ухсай кĕнекисем чăваш аваллăхне тĕпчемелли пурлăх пулса тăрĕç. Н.И.Ашмарин сăмахсарĕ пек!

Символ-сăнарсем. Сăмахлăхăн илемлĕхе вăйлатмалли мелĕсенчен пĕри — сĕм палли тăрăх пулăмсемпе сăнарсене ытарлатса кăтартни, символсемпе усă курни. Пĕр-пĕр паллă тăрăх ытарлатса каласси халăх сăмахлăхĕнчех вăйлă аталаннă. Чăваш тĕрри-эрешĕнче символлăх вăйлă: пурнăç йывăçĕ, шыв, çĕр, ар-ама тата ытти паллăсем пурте пĕтĕмĕшле пысăк япалана, пулăма сăнарлатса философилле пĕлтерĕшпе кăтартаççĕ.

— Ăçта каян, чĕкеç, каça хирĕç
Ик çунатту тăрăх шыв юхтарса?

Юрăри, юмахри сăнарлă танлаштарăва вăйлатма Чĕкеç, Куккук, Шăпчăк, Ăмăрткайăк, Шаланкă тата ытти тĕрлĕ чĕрчун, кайăк-кĕшĕк ячĕсем тухаççĕ. Каярахпа юптарусене çакă пит йышлă кĕрсе кайнă.

Халăх сăмахлăхне яшă чухнех ăша хывнă Я.Ухсай шухăшлавĕнче халăхра сарăлнă символ сăнарсем кулленех

тĕл пулаççĕ. Унăн танлаштарăвĕсем — символла сăнарсемпе пуян мăшăрлăхсем. Паллах, танлаштарăвăн малтанхи пайĕ хăй тĕллĕн те пĕлтерĕшлĕ. Тӳррĕн ăнланма та юрать ăна. Анчах туйăмсене палăртнă чухне танлаштарăвăн тепĕр пайĕ — пытарса хăварнă шахвăртăвĕ ытларах сисĕнет.

«Кашлатăр Иванов вăрманĕ», — тенĕ Ухсай. Паллах, К.В.Иванова хисеплесе ӳстернĕ йывăççем ешерччĕр тесе ăнланни те вырăнлă. Анчах поэт «вăрман» тесе чăваш поэзине символласа каланă.

Çутçанталăкри пулăмсем этем кун-çулĕнчи япаласемпе меллĕ çыпăçса, символланса пыраççĕ. Юханшывсем (Силпи, Тим, Атăл, Влтава, Дон) — символ-сăнарсем. Вĕсем чăннипех те поэзие çĕклентереççĕ. Символ-сăнарсем **ытарлă сăнарсемпе** тачă тăраççĕ. Якку Ухсай хытă савакан Автан, Шăпчăк, Тăрна, Куккук, Çерçи, Кăвакарчăн, Курак тата ытти вĕççĕр нумай чĕрĕлĕх — йăлтах ытарлă сăнарсем. Сăвăç вĕсем урлă этем тĕнчин туйăм-çуйăмне, хаксене кăтартса парать.

Я.Г.Ухсай поэзийĕнчи ытарлă сăнсемпе сăнарсен кăткăс тытăмĕ сăвăсене йывăрлатмасть, шыв юххиллĕн, хăй тĕллĕнех тухса пырать. Поэт хăш-хăш сăнарсемпе тăтăшах усă курать. Анчах кашнинчех мĕнле те пулин тепĕр енне мала кăларса хурать. Сăмахран, Вут, Çĕр, Шыв, Çил, Хĕвел, Тĕтре, Уйăх, Пĕлĕт; Пӳрт, Карта, Мунча, Лаç; Çăкăр, Тырă, Вăрлăх, Кавăн; Лаша, Качака, Ĕне, Така, Тĕве; Юман, Йăмра, Хурăн, Пилеш, Хăва... Ухсай Яккăвĕн поэзийĕнчи çак сăнарсене пĕрерĕн тишкерсе тухсан, чăваш хресченĕн тĕнчекурăмне, шухăшлавне, пурнăç йĕркине утăм хыççăн утăм курса пыма пулать.

Тăван çĕре, хире, тăпрана миçе тĕрлĕ ӳкермест поэт! Çурхи акара вăл пĕрре, вырмара — тепре, вăрçă хирĕнче — пачах урăх! Пин шухăш поэтăн тăван çĕр, уй-хир, улăх-çаран тавра. Йăлтах чăваш хресченĕн куçĕпе курать! Тăпратусанран тухса Хĕвел тӳпине çĕкленнĕ Улăп-поэт Ухсай.

Вăрман сăнарĕ — Я.Г.Ухсай поэзийĕнчи Тĕнче уçлăхĕн, этем хăтлăхĕн палли. Çутçанталăкпа натурфилософи ытамĕнчи вăрман — хурăнлăх, юманлăх, ăвăслăх е уйрăм йывăççем — пурте хăйсен тӳрĕ пĕлтерĕшĕсĕр пуçне халăх ĕненĕвĕнчи пытарăнчăк асамлăхне палăртса тăраççĕ. Тырă вырнă чухне шăрăхра йывăç сулхăн парать, вăрçă хирĕнче вăрман тăшман самолечĕсенчен пытарать, ватăлсан хурăнсене

пăхса поэт пуç хунă тантăшĕсене аса илет. Вăрман — хӳтĕ паракан вăй. Вăрман — пулăх тăвакан хăват. Вăл тăрантарать. Çырла, кăмпа, кĕпçе ӳстерет. Выçлăх çулхине апат пĕçерме пулăшать: Силпи вăрманĕнче кайăк çăмартисене пухать «Ача чухнехи çăлтăрăм» паттăрĕ. Каçару ыйтать вăл кайăк-кĕшĕкрен, йывăç-курăкран, анчах вĕсен те ăнланмалла этеме — урăхла нимле пурнăç та çук.

Вăрман — тасалăх вырăнĕ. Унта — килĕшӳ çути. Унта çăка çулçи çырулла, унта вĕрене çулçи çутă парать. Вăрман — çăтмах кĕтесĕ. Паллах, вăрман, тăван кил пекех, пăтранма, тăвăлпа кĕрлеме, вутпа çунма пултарать. Анчах вăл пурпĕрех тасалать, чĕрĕлет, илемĕпе савăнтарать. Вăрман — сасă-чĕвĕ кĕввипе юрлакан тĕнче. Хура вăрман тискерĕ Ухсай сăввисенче сахал тĕл пулать. М.Федоровăн «Арçурине», К.Ивановăн «Нарспине» Ухсай тепĕр хут çавăрмасть. Ухсайшăн вăрман — Çеçпĕлĕн тинĕсĕ пекех. Вăл çилпе, ăшăпа, сивĕпе, хĕвелпе, уйăхпа вылять. Вăл пин тĕрлĕ тĕспе хумханать. Унăн хăйĕн шăплăхĕ те, юрри те пур («Вăрман юрри» поэмăна аса илĕр).

Ухсай вăрманĕсем ятсăр мар. Утей, Кĕрленай вăрманĕсем унăн хайлавĕсенче теçеткене яхăн тĕл пулаççĕ!

Вăрманти йывăçсем ятсăр мар. Ячĕсене халăх панă. Символла сăнарĕсене халăхранах илнĕ. Çăка — анне, юман — атте, хурăн — савни, йăмра — ял-йыш, палан — йӳçĕ телей, çĕмĕрт — килĕшӳллĕ юрату... Халăхла мар усă курнă тĕслĕх тупаймарăм. Ытарлатса, урăхлатса каланисем пур, пачах урăхла пĕлтерĕшпе усă курни — çук. Юри хуçкаланса курнăçланман чухне поэзи халăхри сăнарлăха хисепе хурать. Петĕр Хусанкайăн та çавах. Алексей Воробьевăн та.

Кайăк-кĕшĕк ушкăнĕ — Ухсай поэзийĕн «зоопаркĕ». Хушăран-камран вăл çерçие е ула курака ятласа илет, анчах вĕсене те, ыттисене те тăван пек юратать. Куккук сăнарĕ хайлавĕсенче çĕртен те иртет пулмалла. Хĕрсемпе чечексем çинчен кăна юрлакан сăвăçсене тиркет Ухсай, хăй вара вĕсене те, шăпчăка та, ытти илеме те поэзирен сирсе хăвармасть.

Çăхан, хĕрхӳ, ăмăрткайăк, путене, тăри, шăнкăрч — сăвăсенче тĕл пулакан кайăксене палăртса тухсан, эпир ахаль чухне аса илмен кайăксем те поэзи пахчинче нумайййине куратпăр: сĕпсех кайăк, кăвăлти, шаланкă, чарланкă... Ухсай хур кайăкĕсем, тăрнисем вăрçă хирĕнчен тăван енне 1943

çултах вĕçсе килнĕ, «Илемлĕ литература» альманахра пичетленнĕ» (Р.Гамзатовăн юрра хывнă тăрнисенчен чылай-чылай маларах!).

Хура çăхан, шурă акăш, чăпар куккук... Юрăра пур вĕсем, юмах-халапра пур. Юнашарлатса, хирĕçлетсе, юратса, сивлесе — тем тĕрлĕ те асăнать çав кайăксене поэт. Вĕсене кăларса пăрахсан Ухсай сăввисем тăлăха юлаççĕ!

Якку Ухсай кайăкĕсем — сăвă-юрă ăстисем, хăй пекех ĕçчен. Вĕсем вăхăта виçеççĕ, тăвансене пĕрлештереççĕ, пĕрпĕрин саламне вырăна илсе çитереççĕ. Вĕсемех вилнĕ тустăван, савни чунĕсене упраççĕ. Кайăксем — тĕнче илемĕ, чун хавхине çĕклекенĕсем.

Я.Г.Ухсай поэзийĕнчи чĕрĕлетнĕ сăнарсем — шутласа кăларман пуянлăх. Унта шыв, çăлкуç, сывлăм... Унта — йĕр, сукмак, çул, мăн çул... Унта — кăпшанкă, кĕркке, çăрттан, çупах...

Чăваш хресченĕн XX ĕмĕрти тĕнчекурăмĕпе ăнланăвне пĕтĕмлетес тесен, чăваш философĕсен Я.Г.Ухсай поэзине шĕкĕлчеме тивет. Вăл йĕкĕр мăйăр пекех тутă та асамлă.

ЧИ ПЫСĂК ХИСЕП

Çыравçăшăн чи пысăк хисеп — унăн хайлавĕсене шкулта вĕрентни. Çамрăкла вĕренни — чул çине лартни, ватăлсан вулани — юр çине пăрахни. Ача чухне пăхмасăр калама вĕреннĕ ансат та уçăмлă, чуна пăлхатакан сăвă-калава этем ватăличченех манса каймасть. Вăрçă умĕн вĕреннисем Ухсай тесен тӳрех: «Саккун тесен сехре хăпатчĕ», — тесе такмакласа яраççĕ, вăрçă хыççăнхисем вара: «Асту, ун чух эпир ачаччĕ, ларатăмăр сентре çинче», — тесе аса илеççĕ.

Хальхи вĕренӳ кĕнекисенче — урăх сăвăсемпе поэмăсем, сăвăллă романсем. Шкул программисене Ухсай пĕчĕккĕн кĕрсе пынă.

И.Викторовпа И.Тукташ (Семенов) хатĕрленĕ «Чăвашсен илемлĕ литературĕ», М., 1928), С.Горский, С.Угандеев, Е.Захаров (Маден) кăларнă «Литература» (Ш., 1933), Е.Захаровăн «Чăвашсен илемлĕ литератури» (Ш., 1934) вĕренӳ кĕнекисенче Я.Г.Ухсай хайлавĕсем çук. Е.З.Маден

кĕнекинче çамрăккисенчен В.Ахтупайпа (1908 ç.) Уйăп Мишши (1911 ç.) вырăн тупнă, мĕншĕн тесен вĕсен ку вăхăта уйрăм кĕнекесем пичетленсе тухнă. Ухсай Яккăвĕн пĕрремĕш кĕнеки (Сăвăсем. Ĕпхӳ, 1934) Шупашкарти тĕпчевçĕсен аллине часах кĕреймен. Ахальтен мар М.Я.Сироткин Ухсайăн пĕрремĕш кĕнеки тесе Улатăрта пичетленсе тухнă «Савăнăç кĕнекине» (1936) шутланă. Унччен çамрăк сăвăç ячĕ меслетçĕсене илĕртмен пулсан, «Савăнăç кĕнеки» тӳрех кăмăла килнĕ. Ун хыççăн Я.Г.Ухсай хайлавĕсене тĕрлĕ классен программине кĕртме пуçланă. Тăван Çĕршыв вăрçи умĕнхи чăваш сăмахлăхĕн программисене Якку Ухсай çирĕппĕнех вырнаçать. Сăввисемпе статйисене шкул хапăлласа йышăнать.

Акă çав вăхăт сасси: «Сирĕн «Константин Иванов» ятлă статья тăрăх («Красная Чувашия» хаçатран) 6-мĕш класра К.В.Иванов пурнăçне вĕренетпĕр. «Халăхăн ылтăн кĕнеки» сăвăсен ярăмне 10-мĕш класра вуланă май, сирĕн пата çыру çырас кăмăл çĕкленчĕ... *Сире ĕçре сывлăхпа пултарулăх сунса Александр ПЕРМЯКОВ, Вармар поселокĕнчи вăтам шкул, 1938 çул*».

Ку ун чухнехи нумай çырусенчен пĕри. Вăрçăра патгăрла вилнĕ чăваш сăвăçи Александр Иванович Пермяков çырăвĕ Якку Ухсай пултарулăхĕ шкул пурнăçне вĕренӳ кĕнекисенче пичетлениччен пырса кĕнине кăтартать.

Паллах, вăл саманара парти идеологине тивĕçтерекен хăйлавсене çеç суйласа илнĕ. Ухсай Яккăвĕн сăвви-поэмисенче вĕрентӳшĕн кирлĕ тепĕр тĕп пахалăх та уççăнах тапса тăнă: вĕсем илемлĕхе туйма вĕрентнĕ. Унран та хакли — ачасен чунне çывăх пулни. Килĕштермен сăвă-калава шыраса ăшталанмасть ача-пăча. Лайăххине вара вĕрентекен е тус-юлташĕ сĕнсенех шыраса тупма тăрăшать.

«1939—40 вĕренӳ çулĕнче 10-мĕш класс программине Сирĕн творчествăна кĕртнĕ. Эпир, 10-мĕш класра вĕренекенсем, çав программăпа килĕшсе Сирĕн «Халăхăн ылтăн кĕнеки» ятлă поэмăна, «Çĕр айĕнчи Мускав», «Вĕçевçĕ» ятлă сăвăсене пăхса тухрăмăр. Анчах та шел, эпир Сирĕн биографипе тата «Туй» поэмăпа паллашаймарăмăр, мĕншĕн тесен эпир ку материала ниçта та тупаймарăмăр... Эсир пире хăвăр автобиографипе «Туй» поэмăна ярса параймăр-и?

Элĕк районĕнчи Йӳçкассинчи вăтам шкулти 10 «А» класра вĕренекен Василий Григорьев. 1940 çулхи январĕн 15-мĕшĕ».

Йӳçкасси халĕ Муркаш районне кĕрет. В.Г.Григорьев — Чăваш Республикин тава тивĕçлĕ учителĕ, Муркаш енчи паллă педагог. Василий Григорьев пек хастар вĕренекенсем ĕлĕк те пулнă, халĕ те сахал мар. Сăлтавĕ — Ухсайăн витĕмлĕ сăмахĕ.

Ухсай Яккăвĕн пултарулăхне туллинрех çырса тата биографине кăтартса 1941 çулта паллă меслетçĕ Ф.С.Меценатов «Чăваш литератури» (IX—X классем валли) кĕнеке кăларнă.

Вăрçă хыççăн пуçламăш классен «Тăван сăмах» кĕнекисем çĕнелеççĕ. 1—4-мĕш классенне «Тăван Çĕршыв», «Пуканесен бригади», «Чăваш чĕлхи», «Çурхи хаваслăх», «Кĕслеçĕпе упа» хайлавсене кĕртнĕ.

Тăван Çĕршыв вăрçинчен таврăнсан (1946) М.Я.Сироткин тĕпчевçĕн пĕр ярăм çĕнĕ вĕренкĕчĕсемпе вуламăшĕсем (хрестомати) тухаççĕ. Вĕсем кăштах улшăнса 10—12 кăларăм таранах тухса тăчĕç. Мĕн-мĕн кĕнĕ-ха вăл кĕнекесене?

5 класра (7-мĕш кăларăм, 1952, хрестомати): «Вĕçевçĕ», «Асту, ун чух эпир ачаччĕ», «Вырăс ачи». Кунта ĕнтĕ Ухсай биографийĕ те, сăнĕ те пур. Каярахпа «Мухтав» сăвва кĕртнĕ.

6 класра (6-мĕш кăларăм, 1951, хрестомати): «Хĕвел пӳрте кĕрет», «Кăнтăрла» сăвă ярăмĕсем.

7 класра (7-мĕш кăларăм, 1952, хрестомати): Çеçпĕл Мишши çинчен çырнă «Хĕвеллĕ пурнăç юрăçи» статья, «Пирĕн халăхăн ылтăн кĕнеки», «Кĕрхи октавăсем».

8—9 классенче чăваш литературине 30-мĕш çулсем таран вĕреннĕ; çавăнпа И.Тукташ, Н.Ваçанкка, М.Сироткин кăларнă кĕнекесенче Я.Г.Ухсай хайлавĕсем курăнмаççĕ.

10 класра: Я.Г.Ухсай биографийĕ, пултарулăхĕ çинчен çырни. «Тутимĕр», «Халăхăн ылтăн кĕнеки», «Пĕр дивизири чăваш боецĕсемпе командирĕсем чăваш халăхне çырнă çыру»; 1963 çултанпа — «Ту урлă çул» роман, «Кĕлпук мучи» поэма, «Иванов вăрманĕ» сăвă.

Вĕренту ĕçĕнче классен йĕрки ылмашăннă вăхăтра (1962) 8-мĕш класс валли В.Канюковпа Е.Паймина çӳхе кĕнеке кăларнă. Унта Якку Ухсайăн ытти хайлавĕсем çумне «Кĕлпук мучи» хушăннă.

60—70-мĕш çулсенче Я.Г.Ухсай пултарулăхне май пур таран туллирех тата паха тĕслĕхсемпе вĕрентме тăрăшнă. «Самана», «Ял хыпарĕсем», «Савăнăç кĕнеки», «Вăрçă хирĕнче», «Салтак кĕнеки», «Акăшкӳл», «Лирика»,

«Сăвăсем» тата ытти кĕнекисене вулама сĕннĕ, хайланусем (сочиненисем) валли темăсем панă («Я.Ухсайăн вăрçă çулĕсенчи творчести»). 1975 çулта Н.Ваçанккапа П.Емельянов кăларнă «Чăваш литератури» хрестоматире «Çул» («Ту урлă çул») роман тăрăх хайлану валли 4 тема сĕннĕ. Вĕсем пурте колхоз ĕçĕпе çыхăннă: «1929—1930 çулсенче ялти коммунистсемпе комсомолецсем колхоз тăвассишĕн кĕрешни»; «Колхоз — çĕнĕ пурнăç çулĕ»; «Колхозлă ялăн хальхи сăн-сăпачĕ»... Университетăн хатĕрленӳ курсĕ валли кăларнă «Чăваш чĕлхи тата литератури» меслет кăтартăвĕнче (Ш., 1979, И.И.Одюков профессор хатĕрленĕ) Я.Г.Ухсай 4-мĕш тема шутланать. Унта 5 ыйту. Малтанхи пекех — колхоз çулĕ тата Ленин, Чапаев, Конституци ыйтăвĕсемпе Ухсай патриотизмĕ.

1986 çулта V—XI классем валли чăваш литературин тĕпрен çĕнетнĕ программи тухрĕ. Вăл темиçе хут пичетленчĕ, халĕ алă айĕнче татах икĕ проект пур. Пĕри — чăваш шкулĕнче вĕренме, тепри — ятарлă шкулсенче (лицей, гимнази) тарăнрах тишкерме хистекенни. Ку проектсен çитменлĕхĕ — унченхи вĕренту кĕнекисене лайăх вырнаçнă паха хайлавсене çĕнĕ кĕнекесенчен вуçех кăларса пăрахни. Пĕр сăлтавĕ — хайлавсем хальхи тавракурăм шайне тивĕçтерменни, тепри — кĕнекесем хатĕрлес ĕçре тавлашу пур пирки малтан усă курнипе кайранхисем усă курса сăмах илтес мар тени. Ку юрăхсăр япала. Чăваш литературин вăтам шкула тивĕçлĕ хайлавĕсем (ача-пăча классики) малтан кĕнекере пулни-пулманнине пăхмасăрах çирĕп вырăнта юлмалла. Уйрăмах Иванов, Çеçпĕл, Хусанкайпа Ухсай поэзийĕ кашни класрах вырăн тупмалла. Халлĕхе çакă уксахлать. Паллах, ку чухне литература самай пуянланса çитрĕ. Суйламалăх пур. Çамрăксене вырăн пани тĕрĕсех. Çапах та — шкул программин кĕрекинче чăваш литературин вăхăт ватăлтарăйман классики лармалла. Вăтам шкул Якку Ухсай пурнăçĕпе пултарулăхне çĕнĕ программăпа IX тата XI классенче тĕплĕрех вĕрентет. Ытти классенче унăн пĕр-ик хайлавĕ тишкерсе вĕренме тата килте вулама пулмаллах.

Ман шутпа, Я.Г.Ухсай поэзийĕнчен чăвашла та, вырăсла та çак сăвăсем вĕренту ĕçĕнче вырăнлă: «Анне мана тирпейлĕ пиеленĕ», «Карлав аври касмашкăн кайрăм», «Юратрăм эп, хирсем, сире», «Тĕнче шăпланчĕ, иртрĕ юн

шăрши», «Çырă куçăм, ылтăнăмçăм, чунăм», «Çумăр», «Чăваш чĕлхи» тата ыттисем те.

Шкул программнне Я.Г.Ухсай çырнă йышлă поэмăсенчен хăшне кĕртсен ăнăçлăрах пулĕ? Ку ыйту нумайранпа канăçсăрлантарать, анчах вĕрентӳçĕсем те, меслетçĕсем те сĕнӳ таврашĕ сахал параççĕ. Сăлтавĕ паллă — шыравлă вĕренту шайне чăваш шкулĕ хăпарса çитеймен.

Аса илер-ха Я.Г.Ухсай çырнă монологсене, сăвă ярăмĕсене, лирикăлла поэмăсене. 20-мĕш çулсенчи кĕске поэмăсем: «Çăкăр кăвапи» (1927), «Çул çинче» (1927), «Пишпӳлек» (1928). Кусем килти вулава тивĕçлĕ тата литература çаврăшĕнче (кружокĕнче) вĕренме меллĕ. 30-мĕш çулсенче çырнисем: «Силпи енчи çилсем» (1932—33), «Пуканесен бригади» (ача-пăча валли, 1934), «Кĕрхи октавăсем» (1935, шкул программинче пулнă), «Ĕпхӳ пасарĕ» (1937—39), «Туй» (1935—36), «Вут чĕлхе» (1938).

Вăрçă çулĕсенче çырнă поэмăсенчен «Шăллăм» (1944) шкул ачисен вăталăх усĕмне çывăхрах. Анчах ăна халиччен программăна кĕртмен. Вăл «Шурă хурăнпа калаçни» поэмăпа пĕр кĕвĕллĕ, ăна сыпăнтарса вĕрентни вырăнлă. «Чăваш дивизийĕ çинчен каласа паракан поэма» (1942), «Пĕр полк çинчен хунă сăмах» (1943), «Шăпчăк» (1944), «Влтава шывĕ хĕрринче» (1945—47), «Вырăс ачи» (1945, программăра пулнă) поэмăсем паха. Я.Г.Ухсай пултарулăхне Тăван Çĕршыв вăрçипе тачăрах çыхăнтарса вĕрентес пулсан, çак поэмăсем çинче ытларах чарăнса тăмалла. Паллах, поэт еткерĕ чылай анлă. Вăл вăрçă хыççăн çырнă поэмăсем теçеткипе: «Ырă çурт» (1946), «Çыру сĕтелĕ хушшинче шухăша кайни» (1957), «Поэзи пирки килнĕ шухăшсем» (1959—60), «Слакпуç» (1959—64), «Атăл çинче» (1963), «Çĕрлехи çутăсем» (1964), «Чул çурт» (1963), «Вăрман юрри» (1961—64), «Силпи çăлкуçĕ» (1959—65), «Кĕслету тăрринче шухăша кайни» (1963—65), «Шурă хурăнпа калаçни» (1960—64), «Муса Джалиле аса илсе çырнă поэма» (1954—57), трилоги: «Ача чухнехи çăлтăрăм», «Чапаевпа тĕл пулни», «Силпири асамат кĕперĕ» (1955—64). Хальхи XI класс кĕнекинче — «Чапаевпа тĕл пулни», «Шурă хурăнпа калаçни» поэмăсем, «Ту урлă çул» сăвăлла роман, «Тутимĕр» трагеди.

Ытама кĕми пуянлăх. Вăтам шкул кĕнекисене туллин вĕрентме кĕртмеллисĕн шутĕнче «Кĕлпук мучи» эпикăлла

поэма, «Тутимĕр», «Шуйттан чури» трагедисем XI—XII классенче пулсан, вĕсенчен çăмăлраххисене маларахри классенче вырăн парсан аван. Халĕ палăртнă тăрăх, X класра Ухсай поэзине асăнса хăварнă кăна. Çителĕксĕр. Ухсай лирикин лайăх тĕслĕхĕсем тарăн вĕренекен классем валли те пулин пулмаллах. IX класа «Шăллăм» тата «Шурă хурăнпа калаçни» поэмисем юрăхлă-и? VIII класра «Кăвак хуппи» («Чăваш чĕлхи пĕтсе пырать-и халĕ?», 1959) сăвă ăнланмалла та вырăнлă пулассăн туйăнать.

Çĕнĕ программа проекчĕпе чăваш литературин классикĕсем кĕçĕнрех классенче аяккарах тăрса юлчĕç. Кăна тӳрлетме кая мар-ха.

Кашни класăн хăйĕн К.В.Ивановĕ, Çеçпĕл Мишшийĕ, Петĕр Хусанкайĕ, Ухсай Яккăвĕ пулмалла. Апла пулсан, чăваш сăмахлăхĕн кивелми пурлăхне çине тăрса сăвăрса кăларăпăр. Ăна тума классиксен ретне тăнă 15—20 çыравçăн пĕтĕм еткерне тимлĕ пăхса тухнинчен пуçларăмăр. Пирĕн сăмах — шкулта вĕрентекенсене шырава хутшăнма чĕнни.

ЯТУ САН КАЙРЕ ТЕНЧЕ ТАВРА
(Чăваш халăх сăвăçи Ухсай Яккăвĕ çинчен)

«Кашни наци поэзийĕнче пысăкран пысăк çăлтăрсем ялкăшса тăраççĕ, вĕсем çĕрĕн пĕтĕм анлăшĕнчен курăнаççĕ — кусем тутарпа пушкăртăн ватă поэчĕсем Хасан Туфан тата Сайфи Кудаш, чăваш халăх поэчĕсем Яков Ухсай тата Петĕр Хусанкай...»

Леонид Соболев.

«Якку Ухсай — чăн-чăн халăх поэчĕ, пирĕн Çĕршывăмăрăн нумай нацилле литературишĕн сумлă ят. Ухсай поэзийĕн хăватлă юхăмĕ унта хăйĕн тĕсĕпе, хăйĕн кĕввипе, хăйĕн шухăшлавĕпе палăрса тăрать. Эпĕ астăвасса, Александр Твардовский туслă калаçусенче унăн пултарулăхне яланах ырлатчĕ, уйрăмах поэмисене палăртатчĕ. «Тĕлĕнмелле талант!» — терĕ пĕрре ун çинчен вăл».

Мустай Карим.

«Поэзири пысăк калăплă произведенисенчен эпĕ чăваш поэчĕн Яков Ухсайăн «Кĕлпук мучи» ятлă сăвăлла повеçне пирĕн юлашки çулсенчи литературăри чи интереслĕ те паллă произведенисен шутне кĕртсе палăртса хăварасшăн».

Александр Фадеев.

«Кĕлпук мучи» поэма — пире «Василий Теркина» аса илтерекен чăн-чăн халăхла произведени, унта ăшă кулăш, çивĕч ăс хытă тапса тăрать, вăл Кĕлпук мучи колхозникăн хăватлă характерĕпе тата ытти çынсен сăнарĕпе кăна мар, чăваш халăхĕн нацилле традицийĕсемпе тата характерĕпе те паллаштарать».

Степан Щипачев.

«Пирĕн поэзире сăвăлла романсем кирлех, вĕсем этем пурнăçне, çынсем хушшинчи хутшăнусене анлăн сăнласа кăтартма май параççĕ. Вăл форма, ман шутпа, Я.Коласăн

«Çĕнĕ вăхăт» тата «Пулăçă çурчĕ» поэмисенче, Ухсайăн «Ту урлă çулĕнче» тата ытти темиçе произведенире хăйне лайăх енĕпе палăртса хăварчĕ».

Самед Вургун.

«Чăваш поэчĕ Ухсай Яккăвĕ чăн-чăн чĕлхе ăети, вăл çутçанталăка питĕ чĕррĕн курать. Теплерен мана унăн пысăк калăплă «Ту урлă çул» поэмине вулама пачĕç, унта эпĕ тĕлĕнмелле танлаштарусем тупрăм. «Çаврака хĕвел те анчĕ, — тет вăл, — йывăç çуллĕш аяла — халь ăна йăлттам мулкачă пĕр сиксе утланмалла!» Ĕнене поэт пысăк кимĕпе танлаштарать, лавçă аллинчи лашана юханшыв пек курать, çĕрулми ăна така çамкине аса илтерет, путек мăйраки уншăн ăвăс пек çемçе, така мăйраки çаврака кăлтăрмач пек туйăнать... Е тата, акă, хула çамрăкĕн «сас парать урисенче хур чĕппи пек сар штиблет».

Юрий Олеша.

ТУПМАЛЛИ

Ухсай Яккăвĕн пурнăçĕпе пултарулăхĕ 3
Пурнăçĕн паллăрах тапхăрĕсем (çулсен кăтартмăшĕ) 4
Пурнăçĕнчи тĕрлĕ самантсем 11
Пăрпа тăхăмĕ 11
«Эпир пулатпăр ик çĕмĕрт» 15
Пăтăрмах çаврашки 20
Çитмен çырусем 23
Олень-Колодезь: Ухсай хатти 26
Хисеплĕ çилçунатçă 31

Чăваш сăмахĕн ывăнмн ăсти 34
Поэтăн эпистолярийĕ 34
Я.Г.Ухсай — вичкĕн публицист 34
Якку Ухсай — тĕпчевçĕ 36

Ухсай Яккăвĕн сăвă тĕнчи 39
Я.Г.Ухсай поэзийĕн çаврăлăхĕ 40
Ытарлăх мелĕсем 43
Танлаштарусем 46
Куçăм 48
Таныпмаш 48
Ытарлă сăнарсем 50
Символ-сăнарсем 51
Вăрман сăнарĕ 52
Кайăк-кĕшĕк ушкăнĕ 53

Чи пысăк хисеп 54

Яту сан кайрĕ тĕнче тавра 60

24-20

Чувашский государственный институт гуманитарных наук

Станьял Виталий Петрович

Народный поэт Чувашии Яков Ухсай: Штрихи к портрету

Редактор *А.А.Тимофеев-Ыхра*
Художественный редактор *А.А.Трофимов*
Корректор *Г.И.Алимасова*
Компьютерный набор и верстка *Э.В.Кирилловой*

Сданов печать 8.11.2001. Формат 60x90 1/16. Бумага офсетная.
Гарнитура типа Times ET Chuv. Печать офсетная. Уч.-изд.л. 2,7.
Физ.-печ. л. 4,0. Тираж 1000 экз. Заказ № 16.

Чувашский государственный институт гуманитарных наук
428015, Чебоксары, Московский пр., д. 29, корп. 1.

Лицензия № 04143 от 27.02.2001.

24-20

Тĕреклĕ чул та хытă тимĕр
Пĕри те вилĕмсĕр юлмасть.
Тăван чĕлхемĕр ĕмĕр-ĕмĕр
Çап-çамрăк, халь те ватăлмасть.

Ухсай Яккăвĕ